ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 29
ЫТЛАРИКУН
№ 21 (8673)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитетĕнчен, Аслă халăх Хурал Президиумĕнчен, Монголи Халăх Республикин Министрĕсен Советĕнчен (1 стр.).
СССР Министрĕсен Совечĕпе Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитетĕнчен (1 стр.).
СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче (2 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. И. Еремин.—Малта пыракансен опытне саракансем; Пуху пысăк çитменлĕхсем палăртрĕ (2 стр.).
А. Еремеев.—Райсовет сессийĕнче (2 стр.).
А. Смирнов.—Н. В. Гоголь юбилейне хатĕрленеççĕ (2 стр.).
С. Павлов.—Пĕрлешнĕ колхозсенчи культурăллă-массăллă ĕç (3 стр.).
Е. Дмитриенко.—Стахановла цехра (3 стр.).
СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ. П. Осипов.—Вăрман хатĕрлевне ертсе пымалла (3 стр.).
Редакцие килнĕ çырусем (3 стр.).
ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Тунисри ĕçсем (4 стр.).

Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне вăйлатар

Социализмлă Тăван çĕршыв культурăпа наука тата искусство аталанăвĕнче çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнÿсем туса пырать. Большевиксен партийĕпе Совет правительстви ĕççыннисен культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес, пурнăç условисене лайăхлатас тĕлĕшпе çине тăрса тăрăшаççĕ.

«Халăх массисем,—тенĕ В. И. Ленин,—чăн-чăн культурăпа пирĕн патăрти пек хытă интересленни, çав культура ыйтăвĕсене пирĕн патăрти пек тарăн та тĕплĕн лартни урăх ниçта та çук».

Чăваш халăхĕн содержани тĕлĕшпе социализмлă, форма енĕпе нациллĕ культури хăвăрт аталанса пырать. Республикăра шкулсем, клубсем, театрсем, библиотекăсем нумай ĕçлеççĕ. Кинопа радио ĕçĕ, кĕнеке-хаçат кăларас ĕç çулсерен вăйланать. Культура ĕçĕсем валли государство укçа-тенкĕ шеллемест.

Çулпуçăмăр тата учителĕмĕр аслă Сталин рабочисемпе хресченсене пурне те культурăллă тата вĕреннĕ çынсем тумалла, тесе этемлĕх историйĕнче халиччен пулман пархатарлă задача лартрĕ. Çак задача ăнăçлăн пурнăçланса пырать. Çак ĕçре партипе совет организацийĕсене культурăпа çутĕç учрежденийĕсем пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем идеологи ĕçĕн, культурăллă-массăллă ĕçĕн центрĕсем, малта пыракан социализмлă культурăна халăх хушшине саракан учреждениссем пулса тăраççĕ. Вĕсен тивĕçĕ ĕççыннисен культурăллă-техникăллă шайне, массăсен творчествăллă пуçарулăхне ÿстерессн, промышленноçра та, ялхуçалăхĕнче те çĕнĕ ÿсĕмсем тăвассишĕн социализмлă ăмăртăва сÿлĕрех пусăма хăпартасси пулать. Рабочисем, колхозниксем, интеллигенци социализмлă промышленноçпа ялхуçалăхĕнче, наукăпа техника, литературăпа искусство ĕçĕнче тунă çитĕнÿсемпе, тĕнчери лару-тăрупа интересленеççĕ. Вĕсем совет ученăйĕсен çĕнĕ открытийĕсем çинчен, производство новаторĕсен опычĕсем çинчен, писательсен, музыкçăсен, художниксен çĕнĕ произведенийĕсем çинчен пĕлесшĕн. Ĕççыннисен культура ыйтăвĕсене тивĕçтерессн—культурăпа çутĕç учрежденийĕсен хисеплĕ тивĕçĕ.

Чылай вулав çурчĕсемпе клубсем тата библиотекăсемпе культура çурчĕсем культурăллă-массăллă ĕçе начар мар йĕркеленĕ. Патрикел ялĕнчи (Елчĕк районĕ) клуб—колхозниксен юратнă вырăнĕ. Кунта вĕсем лекцисемпе докладсем итлеççĕ, кино кураççĕ, колхоз хорĕн концерчĕсенче пулаççĕ, хаçат-журналсем вулаççĕ, хăйсене интереслентерекен ыйтусем тăрăх ыйтса пĕлеççĕ тата ытти те. Клубри библиотекăн кĕнеке фондĕнче 4.000 кĕнеке ытла. Иртнĕ çулта кăна çĕнĕрен 2.300 тенкĕлĕх кĕнеке туяннă. Клуб заведующийĕ М. Воронцов юлташ çак ĕçре 20 çул ытла ĕçлет. Çакăн пек ĕçлекен клубсем кашни районтах пур.

Анчах та чылай клубсемпе вулав çурчĕсем тата библиотекăсем халĕ те начар ĕçлеççĕ-ха. Хăшпĕр районсенче партипе совет организацийĕсем, колхоз правленисем культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕ çине тимлĕ пăхмаççĕ. Парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем чылай çĕрте ĕççыннисем хушшинчи культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелесси çинчен сайра-хутра кăна сÿтсе яваççĕ, районти культурăпа çутĕç пайĕсен ĕçне конкретно ертсе пымаççĕ. Сахал мар клубсемпе вулав çурчĕсем колхозниксен культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтереймеççĕ, вĕсен ĕçĕнчи политикăллă, идейăллă шайĕ тивĕçлĕ вырăнта тăмасть. Хупă тăракан вулав çурчĕсемпе клубсем те тĕл пулаççĕ. Чылай культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче тирпейлĕх, культурлăх тата тивĕçлĕ йĕркелĕх çук. Вырăнти парторганизацисемпе Советсем çакнашкал çитменлĕхсемпе кĕлĕшсе тăраççĕ.

Тĕслĕхрен, Упакасси (Сĕнтĕрвăрри районĕ) вулав çуртне илер. Вулав çурчĕ ял Совечĕн пĕр пĕчĕк пÿлĕмне кăна вырнаçнă. Кунта çынсем валли ларма мар, тăма та вырăн çук. Ял Совет çуртне уйăхĕ-уйăхĕпе хутмаççĕ. Паллах ĕнтĕ, сивĕ пÿлĕме кам пырса ларĕ-ха? Çыранса илнĕ хаçат-журналсем те ним усăсăр купаланса выртаççĕ. Упакассинчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз 5 ялтан пĕрлешсе тăрать. Ялта интеллигентсен йышĕ те пысăк. Анчах вулав çурчĕ валли кирлĕ условисем туса паман пирки колхозра агитациллĕ-массăллă ĕç сÿнсе ларнăпа пĕрех.

Сĕнтĕрвăрри районĕнче кун пек тĕслĕхсене татах та курма пулать. Районта 17 клуб. Вĕсенчен чылайăшĕ хупă тăраççĕ. «Родина» колхозра иртнĕ çул клубран чăх-чĕп ферми туса хунă пулнă. Халĕ фермăна урăх çĕре куçарнă. Анчах клубра халĕ те нимĕнле ĕç те çук. Çакăн пек çитменлĕхсемпе текех килĕшсе тăма нимĕнле те май çук. Ĕççыннисем хушшинчи культурăллă-массăллă ĕç — политикăллă пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç.

Хĕл вăхăчĕ—колхозниксем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелемелли чи лайăх вăхăт. Обществăллă-политикăллă ыйтусем, наукăпа техника, литературăпа искусство тата тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх лекцисемпе докладсем иртересси, мичуринла акробиологи наукин çитĕнĕвĕсене, колхоз производствинче малта пыракансен опытне пропагандăласси, коммунизмăн аслă стройкисем çинчен халăха анлăн ăнлантарса парасси—культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕнче тĕп вырăнта тăмалла. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕн содержанийĕ пысăк идейăллă пулмалла. Вĕсен ĕçĕ совет çыннисен патриотизмла туйăмне çĕклеме пултартăр, çынсене производствăллă ĕç çине тÿрĕ кăмăлпа пăхма вĕрентчĕр, Ленин—Сталин идейисене халăх хушшине анлăн сарса пыма пулăштăр.

Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕ—хисеплĕ те ответлă ĕç. Çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе пурнăçлама халăх хушшинче ĕçлеме юратакан, пултарулă, культурăллă работниксем кирлĕ. Çавăнпа та культурăпа çутĕç кадрĕсене суйласа илес, вĕсене ĕç участокĕсем тăрăх тĕрĕс вырнаçтарса тухас, вĕсен политикăллă пĕлĕвĕпе ĕçри квалификацине ÿстерес ĕç çине партипе совет организацийĕсен уйрăмах тимлĕ пăхмалла.

Практикăллă ĕçре халлĕхе эпир çакна куратпăр: партин хăшпĕр райкомĕсем çак ĕçе хакламаççĕ, культурăпа çутĕç учрежденийĕсене тивĕçлĕ кадрсемпе çирĕплетме тăрăшмаççĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи культурăпа çутĕç учрежденисен управленийĕпе районсенчи культурăпа çутĕç пайĕсен культура çурчĕсемпе вулав çурчĕсен, библиотекăсемпе клубсен ĕçне татăклăнах лайăхлатмалла, вĕсен ĕçĕ колхозсене хуçалăхпа политикăллă задачăсене ăнăçлă пурнăçлама пулăштăр.

Культура çурчĕсем, вулав çурчĕсемпе библиотекăсем тата клубсем идеологи фрончĕн паллă участокĕ пулса тăраççĕ. Совет çыннисен идейăллă шайĕ кунтанкун ÿссе пынă май культурăпа çутĕç учрежденисен умĕнче тăракан задачăсем те пысăкланса пыраççĕ, совет çыннисем вĕсем умне пысăкрах та пысăкрах требованисем кăларса тăратаççĕ. Культурăпа çутĕç учрежденисен ĕçĕн программи ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн идеологи ыйтăвĕсем тăрăх йышăннă историллĕ паллă решенисенчен тухса тăрать. Партипе совет организацисемпе культурăпа çутĕç органĕсем халăх хушшинчи политикăллă тата культурăллă-массăллă ĕçе тата сÿлĕрех пусăма хăпартĕç, культурăпа çутĕç учрежденийĕсене ĕççыннисене коммунистла воспитани памалли пархатарлă ĕçĕн центрĕсем туса хурĕç.

1951—1952 ÇУЛСЕНЧИ КĔРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА «ЧĂВАШВĂРМАН» ТРЕСТ ЕНĔПЕ 1952 ÇУЛХИ ЯНВАРĔН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Касса хатĕрленĕ	Çул хĕррине илсе тухнă	Турттарса кăларнă	РАЙОНСЕМ	Касса хатĕрленĕ	Çул хĕррине илсе тухнă	Турттарса кăларнă
Улатăр	65,5	65,7	46,1	Первомайски	78,7	43,7	64,1
Элĕк	71,7	60,1	39,1	Пăрачкав	74,2	85,2	80,7
Вăрнар	78,4	66,7	39,3	Советски	58,2	—	47,3
Йĕпреç	69,7	60,1	39,4	Сĕнтĕр	92,8	25,0	71,5
Ишлей	50,0	—	20,6	Вăрмар	55,9	81,0	26,3
Калинино	72,0	48,0	72,2	Çĕрпÿ	51,9	71,1	44,3
Канаш	72,4	72,2	60,5	Шупашкар	82,0	187,1	27,7
Комсомольски	80,9	85,6	73,0	Чкаловски	88,4	67,1	49,2
Куславкка	70,1	78,8	63,2	Чурачăк	68,6	43,9	33,0
Красноармейски	57,0	18,9	42,7	Шăмăршă	55,5	61,5	46,5
Хĕрлĕ Чутай	75,4	55,5	—	Шăхасан	64,5	62,8	40,6
Кувакино	49,6	61,0	27,9	Çĕмĕрле	108,3	68,5	149,3
Сĕнтĕрвăрри	66,6	54,1	33,3	Етĕрне	71,7	80,0	46,4
Муркаш	106,8	109,0	—	Елчĕк	30,2	54,5	38,6
Октябрьски	51,0	72,3	46,0	Тăвай	47,5	71,9	33,6

Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитетĕнчен, Аслă Халăх Хурал Президиумĕнчен, Монголи Халăх республикин Министрĕсен Советĕнчен

Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ, Аслă Халăх Хурал Президиумĕ тата МНР Министрĕсен Совечĕ Партие тата пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕççыннисене чĕререн хурланса 1952 çулхи январĕн 26-мĕшĕнче 18 сехет те 50 минутра, нумай вăхăт хушши йывăр чирленĕ хыççăн (пÿре ракĕ) Мускавра пирĕн Партипе мĕнпур Монголи халăхĕн хаклă тата юратнă организаторĕпе çулпуçĕ, Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюро членĕ, Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕ, пирĕн хаклă та нихçан манми тусăмăрпа юлташăмăр маршал Чойбалсан вилни çинчен пĕлтерççĕ. Чойбалсан юлташ—паттăр Сухэ-Баторăн чи çывăх тусĕ тата соратникĕ, пирĕн Партипе государствăна тăваканĕ тата руководителĕ, пирĕн халăхăн юратнă çулпуçĕ вилни пирĕн Партишĕн, пирĕн халăхщăн пысăк çухату пулса тăрать.

Хăйĕн пĕтĕм пурнăçне халăх революцийĕ ĕçне тата хамăр çĕршыва чечеклентерес ĕçе панă Чойбалсан юлташ ячĕпе пирĕн социализм çулĕпе пыракан Партин тата пирĕн государствăн пĕтĕм историйĕ çыхăнса тăрать.

Эпир чĕререн хурланса пирĕн хаклă Чойбалсанăн, çулăмлă революционерăн, ĕççыннисен телейĕшĕн, миршĕн, демократишĕн, социализмшăн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешекенĕн, халăхсен туслăхĕшĕн, пирĕн халăхпа аслă Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинчи туслăхшăн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешекенĕн çутă ячĕ умĕнче хамăр пуççене таятпăр.

Пирĕн юратнă та хаклă çулпуçăмăрăн Чойбалсан юлташăн пĕтĕм чаплă пурнăçĕ пирĕн партин мĕнпур членĕсемшĕн тата пирĕн çĕршыври ĕççыннисемшĕн социализмшăн кĕрешес ĕçре паха тĕслĕх пулса тăрать.

МОНГОЛИ ХАЛАХĔН РЕВОЛЮЦИЛЛĔ ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔ.
МОНГОЛИ ХАЛАХ РЕСПУБЛИКИН АСЛĂ ХАЛАХ ХУРАЛ ПРЕЗИДИУМĔ.
МОНГОЛИ ХАЛАХ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ.

СССР Министрĕсен Совечĕпе Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитетĕнчен

СССР Министрĕсен Совечĕпе Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕ чĕререн хурланса январĕн 26-мĕшĕнче 18 сехет те 50 минутра нумай вăхăт хушши йывăр чирленĕ хыççăн (пÿре ракĕ) Мускавра, Кремль больницинче Монголи халăхĕн çулпуçĕ, Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕ, Монголи халăхĕн революциллĕ Партийĕн Политбюро членĕ, Совет Союзĕн шанчăклă тусĕ маршал Чойбалсан вилни çинчен пĕлтереççĕ.

ССР СОЮЗĔН МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ.
ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (большевиксен) ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔ.

Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн Центральнăй Комитетне

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕ Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн руководителĕ, Монголи халăх геройĕн Сухэ-Баторăн соратникĕ тата тусĕ, Монголи Халăх Республикине туса хураканĕ маршал Чойбалсан вилнĕ пирки сирĕнпе пĕрле хурланни çинчен пĕлтерет.

Чойбалсан юлташ вилнипе Монголи Халăх Республикинчи ĕççыннисем Монголи халăхĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен аслă çынна, Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕн организаторне çухатрĕç. Вăл ертсе пынипе Монголи халăхĕ феодалсемпе ют çĕршыв колонизаторĕсен влаçне сирпĕнтерсе антарчĕ, халăх демократи государствин тăвас çул çине тăнĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсем Монголи халăхĕн чаплă çулпуçĕн Чойбалсан юлташăн çутă ячĕ ялан упраса тăрĕç тата вĕсем Монголи халăхĕ малашне те Сухэ-Баторпа Чойбалсан кăтартнă çулпа пырасса шанса тăраççĕ.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (большевиксен) ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔ.

Монголи Халăх республикин Аслă Халăх Хурал Президиумне Монголи Халăх Республикин Министрĕсен Советне

ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕ тата ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ Монголи Халăх Республикин Правительствине халăхне Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕ маршал Чойбалсан вилнĕ пирки чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Чойбалсан юлташ совет халăхĕн шанчăклă тусĕ, Монголи Халăх Республикипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăха—Монголи халăхĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕн çирĕп шанăçне аталантарса тата тĕреклетсе пырассишĕн чĕререн тăрăшса кĕрешнĕ.

Монголи халăхĕн мухтавлă çулпуçĕ, монголи халăх демократи государствине ывăнма пĕлмесĕр туса пынă маршал Чойбалсан вилнĕ пирки Совет Союзĕнчи халăхсем Монголи халăхĕпе пĕрле хурланаççĕ.

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ.
СССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ.

СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинчен

СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви Монголи халăхĕн çулпуçĕ, Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕ маршал Чойбалсан вилнĕ пирки хурланса пĕлтерет.

Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕ маршал Чойбалсан чирĕ çинчен тата вăл вилнĕ сăлтав çинчен медицина заключенийĕ

Маршал Чойбалсан нумай вăхăт хушши сулахай пÿре (рак) шыçнипе чирленĕ, çавăн пирки ăна операци тумалла—шыçнă пÿрене сулахай енчи шыçă пÿре умĕпе (метастаз) пĕрле касса кăлармалла пулнă.

Чĕрепе сосудăсен ĕçĕ вăйсăрланса çитнипе маршал Чойбалсан 1952 çулхи январĕн 26-мĕшĕнче 18 сехет те 50 минутра вилсе кайнă.

Патологипе анатоми тĕлĕшĕнчен касса пăхни çакна кăтартнă: метастаз (шыçă сарăлни) диафрагма облаçне тата сылтăм пÿре умне тивнĕ, ăна пĕтĕмпех пĕтерсе хунă.

Маршал Чойбалсан пÿре умĕсем пачах ĕçлеме чарăннипе вилсе кайнă.

Кремльти Лечсанупр начальникĕ, СССР Медицина наукисен академийĕн член-корреспонденчĕ П. ЕГОРОВ.
СССР Медицина наукисен академийĕн действительнăй членĕ профессор А. БАКУЛЕВ.
Професоорсем А. АБРАМЯН, А. ФРУМКИН.
Врач Г. ЕЛИСЕЕВ.
СССР Медицина наукисен академийĕн действительнăй членĕ А. АБРИКОСОВ
Медицина Наукисен кандидачĕ Ф. АБРИКОСОВА.

1952 çулхи январĕн 26-мĕшĕ.

* * *

Юлашки çулсем хушшинче маршал Чойбалсан хытă чирленĕ. Юлашки вăхăтра маршал Чойбалсан сывлăхĕ сасартăк начарланса çитнĕ, çавăн пирки те маршал Чойбалсан тата Монголи Халăх Республикин Правительстви консультаци тума Монголие совет врачĕсене яма ыйтнă. Улан-Батора А. А. Вишневский профессора тата А. Н. Бузников врач-консультанта янă.

Ăна сыватас тĕлĕшпе вырăнта кирлĕ мерăсем йышăннă хыççăн маршал Чойбалсан Монголи Халăх Республикин Премьер-Министрĕн Заместителĕ Шарап, Чойбалсан арăмĕ Гунтегм, çавăн пекех профессор А. А. Вишневский, врач-консультант А. Н. Бузников тата ăна сыватакан врач Г. И. Елисеев ăсатнипе январĕн 14-мĕшĕнче Мускава килсе çитнĕ, ăна унта Кремль больницине вырнаçтарнă.

Паллă специалистсем хутшăннипе тĕрĕслесе пăхни çакна кăтартнă: маршал Чойбалсан сывлăхĕшĕн çийĕнчех операци туни кирлĕ пулнă. Чойбалсан хăй тата унăн тăванĕсемпе тусĕсем килĕшнипе операци тунă. Анчах операци, кулянмалла пулсан та, хăйĕн результатне пама пултараймап.

Монголи Халăх Республикинчи пĕтĕм халăх траурĕ

УЛАН-БАТОР, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Монголи халăхĕн çулпуçĕ, Монголи Халăх Республикин Премьер-Министрĕ маршал Чойбалсан вилнĕ пирки Монголи Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕ пĕтĕм Монголи Халăх Республикинче пĕтĕм халăх траурне ирттерме йышăннă.

Тĕнчери çĕршывсен Бомбейри кинофестивалĕнче Совет Союзĕн кинофильмсене курма халăх йышлă çÿрет

БОМБЕЙ, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Бомбейра тĕнчери çĕршывсен кинофестивальне илсе пынă кинофильмсене кăтартма пуçланă.

«Стрэнд» кинотеатрăн залĕнче «Мусоргский» кинокартинăна кăтартнă. Ăна курма халăх нумай пухăннă, залра лайăх тулнех пулнă Кино курма пынă çынсем умĕнче СССР халăх артисчĕ Борисов юлташ сăмах тухса каланă. Вырăссен аслă композиторĕ çинчен ÿкернĕ фильма кино курма пынă çынсем юратса пăхнă.

Киносеанс пĕтнĕ хыççăн Борисов юлташа чечек çыххисемпе парнеленĕ.

Тепĕр кинотеатрта—«Кумкум» текен театрта Совет Союзĕн «Падение Берлина» ятлă кинофильмне кăтартнă. Ăна курма та халăх нумай пухăннă.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Малта пыракансен опытне саракансем

Улатӑр хулинчи промышленноҫпа транспорт предприятийӗсенче стахановецсен, рационализаторсемпе изобретательсен йышӗ куллен ӳсет. Чылай новаторсен паха ӗҫӗсене ытти хуласенчи рабочисем, инженерсемпе техниксем пӗлеҫҫӗ.

Паравус деповӗнчи Н. Голованов машиниста чугун ҫул синче ӗҫлекенсем ырӑ кӑмӑлпа асӑнаҫҫӗ. Вӑл йывӑр тиенӗ поездсем илсе ҫӳрес, ҫӗр кӑмрӑкӗ перекетлес тӗлӗшпе уйрӑмах паха тӗслӗхсем кӑтартрӗ, поездсене хӑйӗн-ҫавӑн вӑхӑтра илсе ҫитерет. Унӑн локомотивӗ яланах лайӑх ӗҫлет.

Голованов юлташа хӑй лайӑх ӗҫлени ҫеҫ сырлахтармасть. Вӑл ытти машинистсене хӑйӗн опычӗпе паллаштарать, уҫ ҫинчен стахановецсен шкулӗсенче кружоксенче, производствӑллӑ канашлусенче, рабочисен пӗрлехи пухӑвӗсенче час-часах каласа парать, машинистсене ӗҫре кӑтартса пулӑшать, ҫӗнӗ меслетсене стена хаҫат урлӑ сарать.

Депори парторганизаци пуҫарнипе инженерсемпе техниксем, Голованов юлташ опычӗне меслетне пӗтӗҫтерсе, ятарласа кӗнеке ҫырса кӑларнӑ. Унӑн меслечӗ ҫинчен Хусан чугун ҫул управленийӗн техникӑллӑ советӗнче сӳтсе явнӑ. Техникӑллӑ совет паравус бригадисене пурне те Голованов опычӗпе усӑ курма сӗннӗ.

Хусан чугун ҫул управленийӗ сӗннипе Голованов юлташ хӑйӗн меслечӗпе паллаштарма тата машинистсене пулӑшма Юлиньо, Канаш, Лукоянова тата ытти деповсене час-часах каять. Голованов юлташ примӗрӗпе ӗҫлекенсене тавраш кашни деповрах тенӗ пек курма пулать. Улатӑр депо коллективӗ, Голованов юлташ опычӗпе усӑ курса, 1951 ҫулта чылай ҫӗр кӑмрӑкӗ перекетлерӗ.

Паравус кӑткӑс машина. Ӑна юсама ҫӑмӑл мар. Кашни деталь паха пулсан, пур операцисене те лайӑх тусан ҫеҫ паравуса пысӑк пахалӑхпа юсама пулать. Паравуссем юсакан заводра производство культурине ӳстерессишӗн, пур ӗҫе те пысӑк пахалӑхпа тӑвассишӗн социализмлӑ ӑмӑрту сарӑлнӑ. Ҫав ӑмӑртура Степашкин мастер уйрӑмах паха тӗслӗхсем кӑтартать. Вӑл ертсе пыракан бригада иртнӗ ҫулхи заданине чылай иртерсе пурнӑҫланӑ, пур ӗҫе те пысӑк пахалӑхпа турӗ. Пӗрмай лайӑх продукци туса кӑларнӑшӑн Степашкин юлташа «Чи лайӑх мастер» ятне панӑ. Завод дирекцийӗ Степашкин юлташ ертсе пыракан бригада туса кӑларакан детальсене техникӑллӑ контролерсене кӑтартмасӑр, тӳрех склада хума ирӗк панӑ.

Заводри партипе профсоюз организацийӗсем Степашкин юлташ меслечӗпе ытти бригадӑсене рабочисене тӑтӑш паллаштараҫҫӗ. Инженерсемпе техниксем унӑн ӗҫ опычӗ ҫинчен машинӑпа пичетлесе кӑларнӑ.

Халӗ заводра Степашкин юлташ примӗрне ӗҫлекенсем нумай. Завод дирекцийӗ 39 рабочие хӑйсем туса кӑларакан детальсене техникӑллӑ контролерсене кӑтартмасӑр, хӑйсен клеймине склада хума ирӗк панӑ.

Дудрова закройщица—опытлӑ, пуҫаруллӑ работница. Вӑл пуринчен маларах сӑран перекетлеме тытӑннӑ. Фабрикӑри парторганизаци Дудрова юлташ пуҫарӑвне ырланӑ, ӑна сарма мӗн кирлине пурне те туса панӑ. Атӑ-пушмак фабрикинче перекетлӗх режимне ҫирӗплететессишӗн сарӑлнӑ социализмлӑ ӑмӑртӑва кашни закройщик хутшӑннӑ. Нумай рабочисем перекетленӗ материалтан плантан иртерсе атӑ-пушмак ҫӗлеҫҫӗ.

Юлашки виҫӗ уйӑх хушшинче Дудрова юлташ 4.410 тенкӗлӗх, Бочарова юлташ—4.131 тенкӗлӗх, Шишкина юлташ—2.042 тенкӗлӗх сӑран перекетленӗ. 1951 ҫулта Дудрова юлташ ертсе пыракан закройщиксен бригади 3 пин мӑшӑр атӑ-пушмак ҫӗлемелӗх сӑран перекетленӗ.

Фабрикӑра резина, пир-авӑр тата ытти материал перекетлессишӗн вӑйлӑ ӑмӑрту пырать. Сазонов вырубщик, Горчакова штамповщица тата ытти рабочисем пӗрер пин тенкӗлӗх паха материал перекетленӗ.

Дудрова юлташ хӑйӗн опычӗпе хулари «Красный восход» тата «Союз инвалидов» артельсенче ӗҫлекенсене паллаштарчӗ.

Хӑма суракан заводсемпе цехсем ӑнӑҫлӑ ӗҫлесси рамщиксен пуҫарулӑхӗнчен нумай килет. Йывӑҫ япаласем тӑвакан комбинатри Седов рамщик хӑй «Бромлей» конструкцийлӗ рамӑпа сменӑра 75-шер кубометр хӑма сурать. Унӑн опытне комбинатри тата ытти предприятисенчи рамщиксем хушшинче сарнӑ.

Хулари парторганизаци малта пыракан опыта сарассине пысӑка хурса хаклать. Предприятисенчи чылай парторганизацисем социализмлӑ ӑмӑртупа стахановла юхӑма вӑйлатассишӗн, производство новаторӗсен пуҫарулӑхне пултарулӑхне пӗрмай ӳстерессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Паллӑ стахановецсем, рационализаторсемпе изобретательсем хушшинче коммунистсемпе комсомолецсем нумай. Вӗсем технологи процессне ҫӗнетсе лайӑхлатассишӗн, производствӑри резервсене тата мӗнпур майсемпе лайӑх усӑ курассишӗн большевикла хӑюлӑхпа кӗрешеҫҫӗ.

Паравуссем юсакан заводри, йывӑҫ япаласем тӑвакан комбинатри тата атӑ-пушмак фабрикинчи парторганизацисене Пӗтӗм Союзри политикӑллӑ тата наукӑллӑ пӗлӳсем сарас тӗлӗшпе ӗҫлекен обществӑн Улатӑрти уйрӑмӗ паллӑ стахановецсен опычӗсене хулари тата республикӑри предприятисенче сарма материал хатӗрлеҫҫӗ.

Малта пыракан опытпа меслетсене сарас ӗҫре ҫитменлӗхсем те сахал мар-ха. Хулари предприятисенче уйрӑм рабочисем ӗҫ нормине тултараймаҫҫӗ, рационализаторсен сӗнӗвӗсене вӑхӑтра пӑхса тухса пурнӑҫа кӗртмеҫҫӗ, стахановла шкулсем ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак ҫитменлӗхсене тӳрлетмелле кирлӗ.

Автомашинӑсем юсакан мастерскойра, хулари промкомбинатра, судно юсакан мастерскойра ӗҫ нормине тӑтӑш иккӗшер хут иртерсе тултаракан стахановецсем пур. Ку предприятисенчи партипе профсоюз организацийӗсем, инженерсемпе техниксем малта пыракан опытпа меслете сарма тӑрӑшмаҫҫӗ.

Партипе профсоюз организацийӗсен, хуҫалӑх руководителӗсен рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен творчествӑллӑ активлӑхне, ҫӗнӗ меслетсене пур майсемпе те вӑйлатса пымалла.

И. ЕРЕМИН,

ВКП(б) Улатӑр хула комитечӗн промышленноҫпа транспорт пайӗн заведующийӗ.

Пуху пысӑк ҫитменлӗхсем палӑртрӗ

Хусан чугун ҫулӗн Улатӑр уйрӑмӗнчи пуҫламӑш парторганизаци отчетлӑ тапхӑрта чылай улшӑнусем турӗ. Парторганизаци бюровӗ коммунистсене большевикла воспитани парас ӗҫе лайӑхлатрӗ. Рабочисем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫ те вӑйланчӗ. Партбюро кашни коммуниста партиллӗ порученисем парса парторганизаци ӗҫне хутшӑнтарать.

Кунпа пӗрлех иртнӗ отчетпа суйлав пухӑвӗ парторганизаци ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пуррине палӑртрӗ. Бюро рабочисен социализмлӑ ӑмӑртӑвне куллен ертсе пыман, хӑшпӗр чухне ӑмӑртӑва ячӗшӗн кӑна туса пынӑ, малта пыракан опыта сарас тӗлӗшпе те ҫителӗксӗр ӗҫленӗ. Парторганизаци бюровӗ администраци ӗҫне тӗрӗслемелли правӑпа кирлӗ таран усӑ курмасть, администраци ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене асӑрхамасӑр хӑварать.

Партиллӗ-политикӑллӑ тата организациллӗ ӗҫсенче те пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Ҫав ҫитменлӗхсене вӑхӑтра пӗтерме тӑрӑшманни ӗҫре сахал мар чӑрмав кӳнӗ. Ку вӑл Хусан ҫулӗн 3-мӗш уйрӑмӗ государство панӑ ҫулталӑкри ӗҫсен планне тултарманнинчен те курӑнчӗ. 1951 ҫулта тиемелли плана 96 процент, пушатмалли плана 98 процент, поездсем ҫӳретмелли ҫулталӑкри графика 62 процент кӑна тултарнӑ.

Партбюро ӗҫӗпе пӗрлех коммунистсем администраци ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене те критикӑларӗҫ. Ширяевпа Гогин тата ытти юлташсем кадрсен пайӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсене палӑртрӗҫ. Кадрсен пайӗн начальникӗ Арапов юлташ кадрсене суйласа илнӗ чухне вӗсен ӗҫлӗ тата политикӑллӑ пахалӑхне тӗпчесе пӗлмест. Ҫавна пула работниксем час-часах улшӑнса тӑраҫҫӗ. Депора халӗ кочегарсем, машинистсемпе машинист помошникӗсем ҫитмеҫҫӗ. Партбюро кадрсен пайӗ мӗнле ӗҫленипе ытла та сахал интересленет, ҫулталӑк хушшинче кадрсен пайӗн ӗҫӗ ҫинчен пӗр хут та сӳтсе явман, парти пухӑвӗсенче те ку ыйтӑва хускатман.

Полгорнов юлташ диспетчер аппарачӗнче ӗҫлекен коммунистсен ҫитменлӗхӗсене критикӑларӗ. Кунти работниксен ӗҫне кирлӗ пек йӗркелемен. Коммунистсем хушшинче ӗҫ дисциплини кирлӗ пусӑмра тӑмасть.

Партбюро хӑйӗн тата парти пухӑвӗн решенийӗсем мӗнле пурнӑҫланса пынине тӗрӗслемест. Ҫавна пула чылай решенисем пурнӑҫа кӗмесӗр юлаҫҫӗ.

Коммунистсем ВКП(б) хула комитечӗн хӑшпӗр ҫитменлӗхӗсене те кӑтартса пачӗҫ. Хула комитечӗн работникӗсем пуҫламӑш парторганизацин пухӑвӗсенче сайра хутра кӑна пулаҫҫӗ. ВКП(б) хула комитечӗ чугун ҫул Улатӑр уйрӑмӗ мӗншӗн плана тултарманнине вӑхӑтра тӗпчесе вӗренмен, ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе вӑхӑтра мерӑсем йышӑнман.

Партбюрон ҫӗнӗ составне коммунистсем ӗҫе лайӑхлатма ҫирӗп наказ пачӗҫ, партиллӗ-политикӑллӑ тата партиллӗ-организациллӗ ӗҫсене лайӑхлатмалли майсене палӑртрӗҫ.

Истори наукине вӗрентекенсен семинарӗ

ВКП(б) Ишлей райкомӗ истори наукине вӗрентекен учительсен семинарне ирттерчӗ.

Семинарта учительсем ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ идеологи ыйтӑвӗсем тӑрӑх йышӑннӑ постановленисене пурнӑҫлас ыйтӑва сӳтсе яврӗҫ. Ку ыйтупа Ишекри шкул директорӗ Н. Кузнецов юлташ доклад турӗ.

Ҫавӑн пекех историпе СССР Конституцине вӗренмелли уроксенче ачасене Тӑван ҫӗршыва юратма воспитани парасси ҫинчен, истори предметне вӗрентес ӑсталӑха ӳстермелли майсем ҫинчен докладсем пулнӑ.

Семинарта истори предметне вӗрентекенсем пӗр-пӗрин опычӗпе паллашрӗҫ.

О. КАЛИНИНА.

Райсовет сессийӗнче

КОМСОМОЛЬСКИ. Район Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗ колхоз фермисенчи обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарас ыйтӑва сӳтсе яврӗ.

Районти нумай колхозсем выльӑхсене хӗл каҫарас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттернӗ.

Анчах та, пӗтӗмӗшпе илсен, районти колхозсем выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарас ӗҫе ҫителӗксӗр туса пыраҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл колхоз председателӗсемпе ялхуҫалӑх специалисчӗсем хӑйсен тӗп обязанноҫӗсене кирлӗ пек туманнинчен, выльӑхсене хӗл каҫарас ӗҫе тивӗҫлипе йӗркелеменнинчен килет.

МТС-ӑн улӑмсене тураса вӗтетмелли 5 машина. Анчах та вӗсемпе паянхи куна ҫитсе те усӑ курмаҫҫӗ. Икӗ машина халӗ те МТС ҫумӗнче ларать. Колхозсене илсе кайнӑ машинӑсемпе те ӗҫлемеҫҫӗ.

Фермӑри йывӑр ӗҫсене механизацилес тӗлӗшпе МТС-ра ятарласах механик тытаҫҫӗ. Анчах та механик П. Новиков колхозсенче пачах та пулмасть. Вӑл фермӑри работниксене машинӑсемпе усӑ курма вӗрентмест. «Ҫӗнтерӳ» колхоз 1950 ҫултах кормокухня тумалли хатӗрсем илнӗ. Механик пулӑшманнипе тата колхоз правленийӗ тӑрӑшманнипе пула, вӑл хатӗрсене халӗ те вырнаҫтарса лартман.

Хӑшпӗр колхозсенче выльӑхсене шӑварма шыв ҫитмест.

Преципе тухса калакан депутатсем уйрӑмах ялхуҫалӑх специалисчӗсем начар ӗҫленине палӑртрӗҫ. Ветеринарипе зоотехника работникӗсем колхозсенче сахал пулаҫҫӗ, выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗҫлекенсен квалификацине ӳстерес тӗлӗшпе кирлӗ пек ӗҫлемеҫҫӗ, чирлӗ выльӑхсене сиплӗнчех сыватма тӑрӑшмаҫҫӗ.

Депутатсем нумай сӗнӳсем пачӗҫ. Выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарас тӗлӗшпе район Совет сессийӗ тивӗҫлӗ решени йышӑнчӗ.

А. ЕРЕМЕЕВ.

Н. В. Гоголь юбилейне хатӗрленеҫҫӗ

Республикӑри культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсем вырӑссен аслӑ писателӗ Николай Васильевич Гоголь вилни 100 ҫул тултарнине паллӑ тума хатӗрленеҫҫӗ. Вулав ҫурчӗсемпе клубсенче тата библиотекӑсенче аслӑ писатель пурнӑҫӗпе творчествине кӑтартакан фотовитринӑсем, выставкӑсем организацилеҫҫӗ, вулакансен конференцийӗсем ирттереҫҫӗ. Муркаш районӗнчи Шетмӗпуҫӗнчи вулав суртӗнче, Кашмашри колхоз клубӗнче Н. В. Гоголь произведенийӗсенчен кӗнеке выставки организациленӗ. Шетмӗпуҫӗнчи лекторсен пӗрлешӗвӗнчи лектор-общественниксем аслӑ писатель ҫинчен лекцисемпе докладсем тата каласусем ирттереҫҫӗ. Ялти лекторсен пӗрлешӗвӗн руководителӗ, ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул директорӗ Н. Павлов ял Советӗнчи колхозсенче «Гоголь—вырӑссен аслӑ писателӗ» тема тӑрӑх лекцисем вуланӑ. Тивӗшри библиотекӑра «Мертвые души» произведени тӑрӑх вулакансен конференцийӗ ирттернӗ. Конференци умӗн вӑтам шкулта вӗрентекен Яковлев учитель вулакансене аслӑ писателӗн пурнӑҫӗпе ӗҫӗ ҫинчен каласа панӑ.

Республикӑри Максим Горький ячӗпе тӑракан библиотека Н. В. Гоголь ҫинчен кӗнеке выставки организацилеме тытӑннӑ. Юбилей кунӗсенче библиотека аслӑ писатель произведенийӗсене вулакансен конференцине ирттерет. Юлашки вӑхӑтра Н. В. Гоголь произведенийӗсене вулакансен йышӗ нумай ӳснӗ.

Республикӑри лекци бюровӗ те аслӑ писатель вилни 100 ҫул тултарнине паллӑ тума хатӗрленет. Лекторсем предприятисемпе учрежденисенче, колхозсенче тата шкулсенче аслӑ писатель ҫинчен лекцисем вулаҫҫӗ. Штатра тӑман Ляпидевский, Бройтман, Терентьев, Никитин тата ытти лекторсем Шупашкар хулинчи предприятисемпе учрежденисенче, Ишлей, Шупашкар районӗсенчи шкулсенче аслӑ писатель пурнӑҫӗпе тата ӗҫӗсемпе паллаштаракан лекцисем вуланӑ.

Экзаменсем вӗҫленчӗҫ

Чӑваш педагогика институтӗнче январӗн 24-мӗшӗнче хӗллехи экзаменсем вӗҫленчӗҫ. Институтра 1.000 ытла студент экзамен тытнӑ. Кӑҫалхи экзаменсем студентсем вӗреннӗ материала иртнӗ ҫулхинчен ҫирӗпрех пӗлнине кӑтартрӗҫ, отличниксен хисепӗ те чылай ӳсрӗ.

Историпе филологи факультечӗн деканӗ Г. В. Васильев доцент ҫапла каласа пачӗ:

— Экзаменсен результачӗсем лайӑх. Истори отделенийӗнчи иккӗмӗш курсра вӗренекенсем, пурте тенӗ пекех, экзаменсене «отлично» тата «хорошо» паллӑсемпе тытрӗҫ, вӗсенчен 8-шӗ—отличниксем. Виҫҫӗмӗш курсра вӗренекенсем экзаменсенче илнӗ паллӑсем чуна савӑнтараҫҫӗ. Акӑ Г. Краснова илер. Виҫӗ ҫул хушшинче вӑл пур экзаменсене те «отлично» паллӑсемпе ҫеҫ тытса пырать. Ҫав вӑхӑтрах Краснов—активлӑ общественник. Халиччен вӑтам вӗренсе пынӑ Г. Петровпа Н. Федорова та отличниксен шутне кӗчӗҫ.

Ытти факультетсенчи экзаменсен результачӗсем те лайӑх. Литература отделенийӗнчи виҫҫӗмӗш курсра вӗренекенсем шкул гигиени предмечӗпе пурте «отлично» тата «хорошо» паллӑсем илнӗ.

Экзаменсем тытса пӗтернӗ хыҫҫӑн виҫҫӗмӗш курсри студентсем хулари шкулсене педагогика практикине кайрӗҫ. Педагогика практики икӗ уйӑха яхӑн пырать.

СССР Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствинче

Кӑҫалхи январӗн 25-мӗшӗнче СССР Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗн заместителӗ А. А. Громыко Италин вӑхӑтлӑх поверенӑйне Фигароло ди Гропелло господина йышӑнса, ӑна Итали Правительстви Италипе тунӑ Мирлӗ Договора тепӗр хут пӑхса тухасси ҫинчен 1951 ҫулхи декабрӗн 8-мӗшӗнче Италин Совет Союзӗнчи посолӗ Брозио господин СССР Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствине панӑ нота пирки Совет Правительствин нотине панӑ.

Аялтарах Итали правительствин нотинче тата Совет правительствин ответлӑ нотине каланисене пичетленӗ.

Итали правительствин Брозио посол 1951 ҫулхи декабрӗн 8-мӗшӗнче панӑ ноти

«Эпӗ Италипе тунӑ хальхи Мирлӗ Договор хальхи вӑхӑтра Итали йышӑнакан вырӑнпа сурасусӑр пулса тӑни ҫинчен, Итали Правительстви темиҫе хутчен те тунӑ заявленисем ҫинчен тата Пӗрлешӳллӗ Королевство, Франци, Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительствисем сентябрӗн 26-мӗшӗнче тунӑ деклараци ҫинчен, ҫавӑн пекех тата ытти Правительствӑсен представителӗсем тунӑ заявленисем ҫинчен асе илтерме пултаратӑп.

Итали демократиллӗ тата ирӗке юратакан Нацисен ҫемйинче активлӑ тата пӗр тан правallӑ член пулмаллипе пурте йышӑнаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах Мирлӗ Договорӑн шухӑшӗ хальхи лару-тӑрупа текех сурасаймасть.

Мирлӗ Договор тӑрӑх Италие Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн членне илмелле. Тӗп шухӑш ҫакӑн пек пулнӑ: Пӗрлешнӗ Нацисен Уставӗн принципӗсемпе пурте килӗшӳллӗ пулни мӗнпур демократиллӗ Нацисен хӑрушсӑрлӑхне туса хурать, ҫапла вара, Италие те ҫак ҫӗршывсен пӗртан правallӑ членӗ туса хурать.

Мирлӗ Договора ҫакна шута илсе алӑ пуснӑ тата ратификациленӗ пулсан та ҫакӑн пек шутлани пурнӑҫа кӗмерӗ. Договорӑн малтанхи пайӗнче Италин Пӗрлешнӗ Нацисен пӗр тан правallӑ членӗ пулмалли ҫинчен каланӑ пулсан та, Италие Пӗрлешнӗ Нацисен организацине илес тӗлӗшпе Генеральнӑй Ассамблейӑра сасӑланӑ государствӑсен-членсен ытларах пайӗ виҫӗ хутчен пулӑшнӑ пулсан та, ҫак ыйтӑва Хӑрушсӑрлӑх Советӗнче пӑхса тухнӑ чухне тӳрре тухман вето правипе усӑ курса тӑватӑ хутчен кансӗрленӗ.

Итали Пӗрлешнӗ Нацисен шутне кӗмест пулсан, вӑл тӗнчери сыхӑнусене ытти Нацисемпе пӗртан пулнӑ никӗс ҫинче мирлӗ аталантарас тӗлӗшпе тулли пулӑшма та, Договор условийӗсене унта кӑтартнӑ пек ҫӗнӗлле пӑхса тухас тӗлӗшпе Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗнче хӑйӗнче кирлӗ пек вырӑнлӑ утӑмсем тума та пултараймасть.

Ҫав вӑхӑтрах Итали демократиллӗ йӗркесем туса хучӗ, ытти Нацисемпе пӗрле пӗтӗм тӗнчери халӑхсене мирлӗ пурӑнма тата усӑллӑ ӗҫлеме условисем туса парас ӗнӗпе ӗҫлекен тӗнчери нумай организацисене кӗрет, хӑйӗн опекинче тӑракан территорисене Пӗрлешнӗ Нацисен ячӗпе тата вӑл хушнипе тытса тӑрать, Пӗрлешнӗ Нацисем мире тата халӑхсем хушшинчи хӑрушсӑрлӑха сыхласа тӑрас тӗлӗшпе тӑвакан ӗҫсене пулӑшать.

Ҫак условисенче, малтанах каланӑччӗ ӗнтӗ, Мирлӗ Договорӑн шухӑшӗпе хӑшпӗр постановленийӗсем хальхи лару-тӑрӑва сурасуллӑ мар.

Ҫакӑнта каланисем тӑрӑх, манӑн правительство кӑтартса панипе, ҫакӑн пек сӗнӳ пама пултаратӑп: СССР Правительствипе Договора алӑ пуснӑ ытти правительствӑсен, (вӗсене те ҫакӑн пек нотӑсем ярса панӑ ӗнтӗ) Договорӑн малтанхи пайӗ вырӑнсӑра тухнӑ, ӑна Пӗрлешнӗ Нацисен Уставӗнче калакан шухӑшпа килӗшӳллӗ туса улӑштармалла, политикӑллӑ постановленисем, 15—18-мӗш статьясем вырӑнсӑр, ҫар ӗҫӗ ҫинчен калакан постановленисем, 46—70-мӗш статьясем тата вӗсем ҫумне хушса ҫырнисем Италие хӳтӗленес тӗлӗшпе кирлӗ правӑсене пӳлсе тӑраканскерсем Итали демократиллӗ тата ирӗке юратакан нацисен ҫемйинче пӗр тан правallӑ член пулса тӑнипе килӗшмеҫҫӗ тесе йышӑнмалла».

Совет Правительствин 1952 ҫулхи январӗн 25-мӗшӗнче СССР Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗн заместителӗ А. А. Громыко панӑ ноти

«Посол Брозио господин 1951 ҫулхи декабрӗн 8-мӗшӗнче Итали Правительстви Италипе тунӑ Мирлӗ Договора ҫӗнӗрен пӑхса тухасси ҫинчен панӑ нота пирки Совет Правительстви хушнипе ҫакӑн пек заявлени тӑватӑп:

Итали Правительстви Мирлӗ Договорӑн малтанхи пайне, унӑн политикӑллӑ тата ҫар ӗҫӗ ҫинчен калакан постановленийӗсене ҫӗнӗрен пӑхса тухасси ҫинчен ыйту лартса, ҫак постановленисем Итали «демократиллӗ тата ирӗке юратакан Нацисен ҫемйинче пӗр тан правallӑ членӗ» пулвипе килӗшмест, тесе кӑтартнӑ. Ҫакӑн пек калани вӑл Мирлӗ Договора ҫӗнӗрен пӑхса тухас ӗҫӗн чӑн-чӑн тӗллевӗсене витсе хуни кӑна пулать. Чӑннипе илсен, фактсем кӑтартнӑ тӑрӑх, ӗҫ Италин пӗр тан прависем ҫинчен мар, Мирлӗ Договора ҫӗнӗрен пӑхса тухнипе Итали агрессиллӗ Атлантика блокне тата ҫак блок ҫӗнӗ тӗнче вӑрҫине хатӗрленес тӗллевпе туса ирттерекен ҫар ӗҫӗсене тата ытларах активлӑрах хутшӑнмалла тӑвасси ҫинчен пырать. Ҫак енчен илсен Италипе тунӑ Мирлӗ Договора ҫӗнӗрен пӑхса тухма сӗнни вӑл Итали территорине, унӑн ҫынсен тата материальнӑй ресурсӗсене Атлантика блокӗн агрессиллӗ тӗллевӗсене пӑхӑнтарас тӗлӗшпе ирӗклӗ пулма тӑрӑшни кӑна пулать. Ҫакӑн ҫинчен Совет Правительстви хӑй октябрӗн 11-мӗшӗнче США, Великобритани тата Франци правительствисем Италипе тунӑ Мирлӗ Договора ҫӗнӗрен пӑхса тухасси ҫинчен тӑратнӑ деклараци пирки панӑ нотӑсенчех кӑтартса панӑ ӗнтӗ. Асӑннӑ виҫӗ держава Правительствисем, ҫавӑн пекех тата Итали Правительстви шӑпах та ҫак тӗллеве тытни ҫинчен Итали правительствин официальнӑй представителӗсем хӑйсем калани те кӑтартса парать. Ҫавӑн пек, тӗслӗхрен, Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерстви 1951 ҫулхи апрелӗн 14-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ заявленире: Мирлӗ Договорӑн нумай условийӗсене, тӗрӗссипе, ҫӗнӗрен пӑхса тухнӑ ӗнтӗ, «халӗ, юлашкинчен, савӑнӑҫлӑн ҫапла пӗлтермелле: Италипе унӑн союзникӗсем—хӗвеланӑҫӗнчи виҫӗ держава хушшинчи сыхӑнусем малашне Атлантика пакчӗн принципӗсем тӑрӑх кӑна йӗркеленсе пыраҫҫӗ» тенӗ.

Совет Правительстви хӑйӗн 1949 ҫулхи июлӗн 19-мӗшӗнчи тата сентябрӗн 20-мӗшӗнчи нотисенче Итали Правительствине Итали Атлантика блокне кӗнипе хӑйӗн умне мӗнле ответлӑх тухса тӑни ҫинчен асӑрхаттарнӑччӗ ӗнтӗ. Совет Правительстви асӑннӑ нотӑсенче ҫакна кӑтартса панӑ: Итали Совет Союзӗпе Халӑх демократи ҫӗршывӗсене хирӗҫ пыракан Атлантика блокне хутшӑнни вӑл Мирлӗ Договора сӗмсӗррӗн пӑсни пулать. Договорӑн малтанхи пайӗнче каланӑ тӑрӑх, Договор Италипе ҫак Договор ҫине алӑ пуснӑ государствӑсем хушшинчи туслӑ сыхӑнусен никӗсӗ пулса тӑмалла.

Итали Правительстви ҫавӑнтанпа хӑйӗн договорлӑ обязательствисене пӑсас ҫул ҫинче тата малалла кайрӗ. Атлантика блокӗн агрессиллӗ планӗсемпе ҫурасуллӑн пулса Итали правительстви Итали территорине США ҫар, тинӗс-ҫар, сывлӑш-ҫар базисем тума тата Атлантика блокӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен ҫар штабӗсене вырнаҫма пачӗ. Мирлӗ Договор постановленийӗсенче Итали хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене организацилесси тата хӗҫпӑшаллантарасси, ҫавӑн пекех вӗсене Италире вырнаҫтарса тухасси шалти задачӑсене, Итали чиккисене хӳтӗлес тата сывлӑш оборонине йӗркелес майпа кӑна пулса пымаллине кӑтартса панӑ пулсан та, Итали правительстви Итали дивизийӗсене Атлантика блокӗн ҫарӗсен главнокомандующийӗ пулса тӑракан Эйзенхауэр генерал аллине парать. Америка генералӗсем ертсе пынипе Италире вӑрҫа хатӗрленмелли пысӑк программӑна пурнӑҫлаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл оборона задачисемпе нимӗн чухлӗ те сыхӑнса тӑмасть. Вӑл Италие США ертсе пыракан империалистла державӑсен агрессиллӗ блокне ытларах хутшӑнтарать кӑна.

Совет Правительстви ҫапла калама кирлӗ тесе шутлать: Итали Атлантика блокӗн участникӗ пулса юлнӑ условисенче, Итали территорине Америкӑн ҫар базисем организацилеме Италин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсемпе материальнӑй ресурсӗсене Америка генералӗсен аллине панӑ условисенче Мирлӗ Договора ҫӗнӗрен пӑхса тухасси вӑл Атлантика блокӗн агрессиллӗ тӗллевӗсене пурнӑҫлас ӗҫре Италипе ытларах усӑ курмалла тӑвас тенине, Италирен Америкӑн Европӑри агрессийӗн плацдармӗ туса хурас тенине кӑна пӗлтерет. Мирлӗ договора ҫакӑн пек ҫӗнӗрен пӑхса тухасси вӑл Европӑри мире сыхласа хӑварас интересемпе те, Италин пӗр танлӑх тата никама пӑхӑнманлӑх интересӗсемпе те сыхӑнса тӑмасть.

Итали правительстви хӑйӗн нотинче Италие Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн членне илме «вето» ӗнӗскерпе усӑ курни чарса тӑрать тенӗ. Ҫавӑн пек калани вӑл тӗрӗс мар.

Пурте пӗлеҫҫӗ, Совет Союзӗ Италие Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн членне ытти законлӑ правӑпа члена кӗме тивӗҫлӗ государствӑсемпе пӗр тан никӗс ҫинче илессине нихӑҫан та хирӗҫ пулман, хирӗҫлемест те. Италие Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн членне ку тарантчен США, Великобритани, Франци правительствисен айӑпӗпе кӑна илмен. Италие Пӗрлешнӗ Нацисен Организацине илес тӗлӗшпе вӗсем тытакан позици государствӑсен пӗр тан правалӑх принципӗсене пӑсать, мӗншӗн тесен асӑннӑ виҫӗ державӑсен правительствисем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Итали пекех пулнӑ ытти государствӑсене члена илессине чӑрмантарса тӑраҫҫӗ.

Ҫакна май Совет Правительстви Итали Правительствине ҫакӑн ҫинчен асӑрхаттарма кирлӗ тесе шутлать: Итали Атлантика блокне хутшӑнни тата ҫак блок Европӑра туса иртгерекен ҫар ӗҫӗсене хутшӑнни Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн членне кӗрес текен государствӑсем умне тӑратакан ыйтусемпе пӗрре те сурасуллӑ мар. Кунта уйрӑмах тата ҫакна шута илни кирлӗ: Итали вӑрҫа гитлерла Германи енче пулса хутшӑннӑ. Итали Атлантика блокне кӗни Италие ООН-а илесси ҫинчен тӑракан ыйтӑва татса парас ӗҫре ҫӗнӗ йывӑрлӑхсем кӑларса тӑратать.

Совет Правительстви ҫапла калама кирлӗ тесе шутлать: вӑл Италипе тунӑ мирлӗ договора ҫӗнӗрен пӑхса тухассишӗн тӑрать, анчах та ҫакӑн пек ҫӗнӗрен пӑхса тухни вӑл мире тӗреклетес ӗҫпе ҫурасуллӑ пулмалла тата Итали чӑннипех пӗр тан правallӑ тата никама пӑхӑнман ҫӗршыв пулма пулӑшмалла Совет Правительстви мире сыхласа хӑварас тата ӑна тӗреклетес интересене тӗп вырӑна хурса, ҫавӑн пекех тата Итали пӗр тан правallӑ государство пултӑр тесе ҫапла пӗлтерет: вӑл Италипе тунӑ Мирлӗ Договора ҫӗнӗрен пӑхса тухма тата тивӗҫлӗ пулӳсене сирсе яма Итали агрессиллӗ Сурсӗр Атлантика блокӗнчен тухсан тата хӑйӗн территорийӗнче ют ҫӗршыв государствисене ҫар базисем тата хӗҫпӑшаллӑ вӑйсем тытма ирӗк памасан кӑна хатӗр пулма пултарать.

Фигароло ди Гропелло господин нотӑна хӑйӗн правительствине пама пулни ҫинчен пӗлтерчӗ.

Решени хыҫҫӑн решени...

Халиччен Шӑмӑршӑ районӗнчи ялхуҫалӑх пайӗн заведующийӗ пулса ӗҫленӗ Баскаков юлташа Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем хӑйсен артелӗн председательне суйланӑ.

Унтанпа вӑхӑт чылай иртрӗ ӗнтӗ. Калас пулать, Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз организаципе хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен ерипен тӗрекленнӗ, уйрӑмах выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ юлса пынӑ. Ҫакна Баскаков юлташ районта ӗҫленӗ чухнех аван пӗлнӗ.

Колхозниксен ӗҫне тӗрӗс йӗркелесен, обществӑллӑ хуҫалӑха хӑвӑрт ӳстерсе, тӗреклетсе пыма пулать. Анчах Мичурин ячӗпе тӑракан колхозра ҫавна манӑҫа хӑвараҫҫӗ. Артель руководителӗсен ӗҫ меслечӗ тӗрӗс мар. Чӑн та, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес пирки правлени ларӑвӗсенче, колхозниксен пухӑвӗсенче час-часах сӳтсе яваҫҫӗ, лайӑх решенисем йышӑнаҫҫӗ. Иртнӗ ҫулхи октябрӗн 31-мӗшӗнче пулнӑ ларура правлени выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пуррине, сӗмахран, выльӑх апачӗпе тӗрӗс усӑ курманнине, фермӑсем валли шыв ҫителӗклӗ парса тӑманнине, витесене юсаманнине палӑртнӑ. Фермӑсен заведующине ӗҫе лайӑхлатма, строительство бригадин бригадирне витесем юсассипе хӑвӑртлатма хушса хӑварнӑ.

Уйӑх иртет, иккӗмӗш ҫине те каять. Ҫав вӑхӑт хушшинче фермӑсен ӗҫне лайӑхлатасси ҫинчен правлени ларӑвӗнче икӗ хутчен сӳтсе яваҫҫӗ. ҫӗнӗрен решенисем йышӑнаҫҫӗ. Ӗҫ ҫав-ҫавах малалла каймасть. Строительство бригадин бригадирӗ Кудряшов юлташ витесене юсас ӗҫе организацилес тӗлӗшпе нимскер те тумасть.

Колхоз выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма япӑх хатӗрленни юлашкинчен районти ялхуҫалӑх пайне те пӑшӑрхантарать. Ялхуҫалӑх артельне главнӑй зоотехник Ильин юлташ пырса ҫитет. Вӑл комисси тӑвать те вӑрӑм акт ҫырса хатӗрлет. Кунта пурне те палӑртнӑ: строительсен бригадирӗ ним ӗҫ тумасӑрах кашни уйӑхра 52,5-шер ӗҫкунӗ илсе пурӑннӑ. 1951 ҫулшӑн ӑна 490 ӗҫкунӗ ытла ҫырса панӑ; выльӑх-чӗрлӗх начар ӳт-пуллӗ; фермӑсем валли шыв ҫитмест; фермӑсен заведующийӗ ответлӑха туйса ӗҫлемест т. ыт. те. Акт ҫырнӑ хыҫҫӑн та улшӑнусем ҫук.

Мӗн каламалла-ха ҫак акт пирки? Ку ӗнтӗ специалист колхоза пулӑшни пулать-и-ха? Каламасӑрах паллӑ, акт ҫырнипех ӗҫе лайӑхлатма ниепле те май килмест. Ӗҫе йӗркелесе яма пулӑшни, колхозниксене вӗрентни кирлӗ. Главнӑй зоотехник Ильин юлташӑн та ӗҫ меслечӗ Мичурин ячӗпе тӑракан колхозри руководительсенни пекех юрӑхсӑр.

Ялхуҫалӑх артелӗнчи фермӑсем ҫинчен райсовет исполкомӗн ларӑвӗнче те икӗ хутчен пӑхса тухса решени йышӑннӑ. Анчах решенисен кун-ҫулӗпе кайран никам та интересленмен.

Колхоз председателӗ Баскаков юлташ правлени, колхозниксен пухӑвӗ йышӑннӑ решенисене ҫирӗп пурнӑҫласа пырассине организацилеме тивӗҫ, ҫавӑн пекех унӑн ӗҫ дисциплинине хытармалла. Райсовет исполкомӗпе унӑн ялхуҫалӑх пайӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе лайӑхлатма колхоза чӑн-чӑн пулӑшу памалла.

Н. КОЧЕТОВ.

Шӑмӑршӑ районӗ.

Пĕрлешнĕ колхозсенчи культурăллă-массăллă ĕç

Колхозсем пĕрлешсе пысăкланни ялти культурăпа çутĕç ĕçне çĕнĕ пусăма хăпартма май пачĕ. Колхозсенче çĕнĕ клубсем, библиотекăсем, бригадăсенче хĕрлĕ кĕтессем уçăççĕ. Культура учрежденийĕсене электричество, радио, телефон кĕртеççĕ.

Çĕрпӳ районĕнче культурăпа çутĕç учрежденисен хисепĕ çултан-çул ӳсет. Халĕ районта культура çуртĕ, районти библиотека, 17 вулав çуртĕ, 7 клуб, 3 ялти библиотека тата уй-хир бригадисенче хĕрлĕ кĕтессем ĕçлеççĕ. 16 вулав çурчĕ çумĕнче лекторсен группи организациленĕ.

Районти нумай вулав çурчĕсемпе клубсем, библиотекăсемпе хĕрлĕ кĕтессем ялта культурăллă-массăллă ĕçе начар мар йĕркеленĕ. Нĕрĕшри вулав çурчĕн совечĕ çирĕп план тăрăх лекцисемпе докладсем, калаçусем ирттерет. Вулав çуртĕнче справкăсем памалли сĕтел, коммунизмăн аслă стройкисемпе паллаштаракан витрина, çĕнĕ кĕнекесен выставки тунă. Вулав çурчĕн совечĕ пулăшнипе ял Советне кĕрекен колхозсенчи пур бригадăсенче те хĕрлĕ кĕтессем организациленĕ. Вулав çурчĕпе хĕрлĕ кĕтессене колхозниксем кашни каçах йышлăн пухăнаççĕ.

Елаш ял Советĕнче вулав çурчĕ çĕнĕ пысăк пӳрте вырнаçнă. Унта радио кĕртнĕ.

Туçири, Анатри Кипекçери, Первомайскинчи, Тутарла Кăнашри вулав çурчĕсем хăйсен ĕçĕсене палăрмаллах лайăхлатрĕç.

Мичурин ячĕпе тăракан колхоз клубĕнче час-часах кино е спектакль кăтартаççĕ, ялти лекторсем тĕрлĕ темăсем тăрăх докладсем тăваççĕ.

Библиотекăра Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин кĕнекисем, вырăс литература классикĕсен, Сталинла премi лауреачĕсен, чăваш писателĕсемпе поэчĕсен произведенийĕсем чылай.

Библиотека çурчĕ паянхи колхозлă ял хресченĕсене тивĕçтерейместь-ха. Мичурин ячĕпе тăракан пĕрлешсе пысăкланнă колхоз членĕсем хăйсен библиотека çуртне аслăлатма шутлаççĕ. Иртнĕ çулта вĕсем çĕнĕ типовăй библиотека çурчĕ тума тытăнчĕç. Унта библиотека, вуламалли, канмалли тата ытти пӳлĕмсем те пулаççĕ.

Чылай вулав çурчĕсемпе библиотекăсем начар ĕçлеççĕ-ха. Патăръелĕнчи вулав çурчĕ Хорнсорти промартель правленийĕн çуртĕнче пĕчĕк пӳлĕме вырнаçнă. Вулав çуртне колхозниксем çӳремеççĕ. Унта çĕнĕ кĕнекесем сахал, хаçат-журналсем çителĕксĕр.

Тенсĕрти вулав çурчĕ тĕттĕм те пĕчĕк пӳлĕме вырнаçнă. Çав вăхăтрах ятарласа вулав çурчĕ валли 1948 çулта тума тытăннă пура паянхи кун та çĕрсе ларать. Тĕнсĕр ял Советне кĕрекен Сталин ячĕпе тăракан пĕрлешсе пысăкланнă колхоз районта малта пыракан ялхуçалăх артелĕсенчен пĕри шутланать. Колхозниксем иртнĕ çулта нихçанхинчен вăйлă тырпул туса илчĕç. Ялхуçалăх ĕçченĕсем пуян та культурăллă пурнăç çулĕ çине тăчĕç. Анчах колхозăн пĕр ялĕнче те клуб, хĕрлĕ кĕтессем çукки колхозниксене пăшăрхантарать.

Янсакассинчи вулав çурчĕ, библиотека колхоз правленине пĕрле пĕр пӳлĕмре вырнаçнă. Пӳлĕмре тăвăр. Кунта иртен пуçласа каçченех колхоз правленине ĕçпе пынă çынсем пулаççĕ, чĕлĕм туртса тултараççĕ.

Вулав çурчĕсем çавăн пекех Лĕпсер, Шуртавăш, Вĕрмер, Туçи ял Совечĕсенче те тăвăр пӳлĕмсене вырнаçнă.

Çĕнĕ Катекри колхоз правлени çуртĕнче радио пулнă, хаçат-журналсем чылай çырăнса илнĕ. Колхозниксем пушă вăхăтра кунта хаçат-журнал вулама, радио итлеме, колхозри пултаруллăх кружокĕн спектаклĕсемпе концерчĕсене курма йышлăн çӳренĕ. Кӳршĕри пилĕк колхозпа пĕрлешнĕ хыççăн Çĕнĕ Катекри колхозниксемпе колхозницăсем хушшинчи культурăллă-массăллă ĕç пачах сӳнсе ларнă. Правлени пулнă çуртра бригадăри хĕрлĕ кĕтес уçса парас вырăнне унта лаша хатĕрĕсем тытса усрамалли, тырă хумалли склад тунă.

— Халĕ пĕрле пухăнса çĕнĕ хаçат-журналсем вуламалли вырăн та çук. Радио та итлейместпĕр. Пирĕн бригадăра хĕрлĕ кĕтес уçма кирлех ĕнтĕ,—тет П. Ильин колхозник.

Çавăн пекех «Авангард» колхозри уй-хир бригадисенче те культурăллă-массăллă ĕçсене çителĕксĕр туса пыраççĕ.

— Колхозсем пĕрлешнĕренпе пирĕн яла вулав çурчĕн заведующийĕ Л. Семенов юлташ пачах килме пăрахрĕ,—теççĕ Вăрманкасри колхозниксем.

Районта лекторсен группи 16 шутланать. Вĕсенче 121 çын ĕçлемелле. Паянхи куна вĕсенчен чылайăшĕ япăх ĕçлеççĕ-ха. Сăмахран, Янсакассинчи, Елашри, Уйкасри лекторсен групписенчи лекторсем иртнĕ çулта ĕçсыннисене пĕр лекци те, пĕр доклад та туса паман. Ивановăри лекторсен группипе сичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ Р. Ухватова юлташ ертсе пырать. Вăл лекторсене пухса калаçмасть.

Ялти лекторсене суйласа илнĕ чухне ку таранччен энир çак ĕçе ытларах учительсене хутшăнтарма тăрăшнă. Колхозниксем тĕнчери лару-тăру, миршĕн кĕрешекенсен çĕнтерĕвĕсем, коммунизмăн аслă стройкисем çинчен пĕлесшĕн. Çав вăхăтрах колхозлă ял хресченĕсем вăйлă тырпул туса илес, ĕратлă та йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçсемпе, малта пыракан совет агротехника наукин çĕнтерĕвĕсемпе, мичуринла агробиологи вĕрентĕвĕпе, санитарипе гигиена тата ытти ыйтусемпе интересленеççĕ. Çак ыйтусем çинчен колхозниксене ялти интеллигенци ăнлантарса пама тивĕç. Халĕ пирĕн ялсенче медицинăпа ветеринари работникĕсем, агрономсемпе зоотехниксем, ялхуçалăх механизаторĕсем, электромеханиксем йышлăн ĕçлеççĕ. Колхозсене вăтам тата аслă пĕлӳ илнĕ ялхуçалăх специалисчĕсем ертсе пыраççĕ. Вăйлă тырпул, йышлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕх мастерĕсем ӳсе ситĕнчĕç. Вĕсене докладсемпе лекцисем тăвас ĕçе хутшăнтармалла.

Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕç пирĕн районта çителĕксĕр пулса пырать. Апла пулин те, райсовет исполкомĕ пирĕ чылай чухне вăхăтра пулăшмасть. Пĕр тĕслĕх: Хыркассипе Патăръелĕнчи вулав çурчĕсен ĕçĕсем çинчен райсовет исполкомĕн ларăвĕнче 1951 çулхи июнь уйăхĕнче сӳтсе явнă. Вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса паха решени йышăннă. Анчах та вăл решени халĕ те пурнăçа кĕрсе çитмен.

Вырăнти Советсен вулав çурчĕсемпе библиотекăсене куллен пулăшмалла. Колхоз правленисен пĕрлешнĕ колхозсенчи уй-хир бригадисенче хĕрлĕ кĕтессем уçма юрăхлă çуртсем тупса памалла. Çителĕклĕ чухлĕ инвентарь, кĕнеке илмелле, хаçат-журналсем çырăнса памалла. Хĕрлĕ кĕтессен ĕçне куллен ертсе пырасси, практикăллă ĕçре вĕсене ялан пулăшасси, ялсенчи культпросвет учрежденисем валли лайăх кадрсем тупса парасси—пирĕн паянхи тивĕç пулса тăрать.

С. ПАВЛОВ,
районти культурăпа çутĕç пайĕн заведующийĕ.

СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ

Вăрман хатĕрлевне ертсе пымалла

Комсомольски районĕнчи колхозсем 1951 çулхи декабрĕн 19-мĕшĕ тĕлне кварталта йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,7 процент, каснă йывăçа çул хĕррине кăлармалли плана 166 процент тултарчĕç. Çĕнĕ çул умĕн ирттернĕ стахановла вунăкунлăха хутшăнса колхозниксемпе колхозницăсем 1952 çулшăн 3.957 кубометр йывăç хатĕрленĕ, 4.396 кубометр каснă йывăçа складсене турттарнă. «Красная звезда» колхоз (председателĕ П. Яковлев юлташ), Мичурин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Е. Карпов юлташ) сезонри вăрман хатĕрлемелли плана 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне планран ирттерсе тултарчĕç. Вăрман хатĕрлемелли плана тултарассишĕн «Хунав», Калинин ячĕпе тăракан, «Дружба», «Ленинская победа» колхозсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Вăрман хатĕрлев планне тултарасси ял Советсем колхозсене ертсе пынинчен чылай килет.

Хĕллехи сезон планне тултарас тесен колхоз правленийĕсен тата ял Совечĕсен нумай ĕçлемелле.

Аслă Сталин умĕнче илнĕ социализмлă обязательствăсене срокчен пурнăçлассишĕн районти малта пыракан ял Советсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем вăрманта ĕçлекенсен ыйтăвĕсене куллен тивĕçтерсе пыраççĕ, ĕç мĕнле пынине лайăх пĕлсе тăраççĕ. Массăсемпе тачă çыхăнса тăнипе ял Советсем организаципе воспитани ĕçне большевикла йĕркелесе тăраççĕ, колхозсенче палăрнă çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Мичурин ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ малтанхи вăхăтра вăрманта ĕçлеме çынсем уйăрас ĕçе сӳрĕккĕн туса пынă, ĕç вăйне кирлĕ вырăна хуман, вăрман касакансен бригадисене ĕçе япăх пĕлекен çынсене уйăрнă. Çав колхозрах лашасем валли вăхăтра выльăх апачĕ, хĕл вăхăтне кĕрсен ĕçлеме çунасем вăрмана çителĕксĕр янă. Нĕркеç ял Совет исполкомĕ хăйĕн ларăвĕнче колхоз правленийĕ вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине сӳтсе яврĕ, палăрнă çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме решени йышăнчĕ, колхозниксем валли вăрман ĕçлевĕ çĕрте кирлĕ условисем туса пама хушса хăварчĕ.

Кивĕ Сĕтнер ял Совечĕ вăрман хатĕрлев планне тултарас енĕпе сахал мар решенисем йышăннă, çапах та вăл решенисене пурнăçа кĕртессине йĕркелемен. Ял советне кĕрекен «Правда», «Искра», «Красное Сормово» колхозсенче вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе çитменлĕхсем халĕ те чылай. Асăннă колхозсем плана тултармасăр пыраççĕ. Çĕнĕ Мăрат, Комсомольски, Чĕчкен, Хирти Мăнтăр ял Совечĕсем те вăрман хатĕрлессине татăклă ертсе пымаççĕ. Хирти Мăнтăр ял Совет председателĕ Хораськин юлташ ку ĕçпе сахал интересленет. Вăл вăрман касакансем мĕнле ĕçленине пĕлмест, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн çителĕклĕ тăрăшмасть. Çавна пула ял Советне кĕрекен «Знамя Коммунизма» колхоз вăрман хатĕрлемелли плана тултараймасăр пырать. Ку колхозра вăрман ĕçлекенсем пĕрмай улшăнса тăраççĕ, ĕç тухăçлăхĕ чакса пырать. Хирти Мăнтăр ял Совечĕн çак çитменлĕхсене шута илсе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Вăрман хатĕрлекенсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлă сармалла, йывăç хатĕрлекен бригадăсене ĕçе лайăх пĕлекен çынсене хутшăнтармалла.

Вăрман хатĕрлев планне тултарас тĕлĕшпе район умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Халĕ, хĕллехи сезонра, колхозниксемпе колхозницăсен плана тултарассишĕн пыракан ăмăртăва хутшăнтарса, пĕтĕм вăй-хăвата хурса ĕçлемелле. Вăрман хатĕрлевĕ—сезонра тумалли ĕç. Хĕллехи лайăх çанталăкпа туллин усă курмалла, плана срокчен тултарассишĕн тăрăшмалла. Çак ĕçе ертсе пырасси—вырăнти Советсен тĕп обязанноçĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Малта пыракан колхозсен опычĕ çакна кăтартать: йывăç касакан бригадăсене пултаруллă çынсем уйăрсан, çак бригадăсем уйрăм звеносемпе ĕçлесен, социализмла ăмăртăва анлă сарсан, ĕç нормине тултарасси пысăк ӳсĕмлĕ пулать. Çак паха опыта пур ял Совечĕсенче те сармалла.

Ял Совечĕсен вăрман хатĕрлекенсем валли кирлĕ условисем туса памалла, вăрманта ĕçлекенсен ыйтăвĕсене куллен тивĕçтерсе пымалла. Вĕсем валли апат-çимĕç, вăрман ĕçлемелли хатĕрсем çителĕклĕ пулмалла.

П. ОСИПОВ,
Комсомольски район Совет исполкомĕн председателĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри стахановецсем. Сулахайран сылтăмалла—А. Краснов фрезеровщик, А. Дешевов шлифовщик, К. Петров слесарь, С. Мильман слесарь, Н. Королев фрезеровщик—вăлах цехри партбюро секретарĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ, цех начальникĕ Е. Дмитриенко, Е. Мищенко слесарь, М. Юхтанов слесарь-лекальщик, Н. Федоров долбежник.

В. АЛЕКСЕЕВ фотоӳкерчĕкĕ.

Редакцие килнĕ çырусем

Паха пуçарăва пӳлсе тăраççĕ

ПЕРВОМАЙСКИ. Жданов ячĕпе тăракан колхоз членĕ Петр Акимович Акимов юлташ таврара паллă платник тата столяр пулнă. Йывăç касас ĕçре вăл пĕлменнине çынсем курман.

1944 çулта Отечественнăй вăрçă фронтĕнче сывăхра çурăлса кайнă тăшман снарячĕ Акимов юлташа сĕм суккăр туса хăварнă. Хĕрсе пурăнас кунра куçсăр тăрса юласси—чăтма çук пысăк хуйхă, анчах вĕри чĕреллĕ колхозник пушана парăнман. Совет çынни иксĕлми туртăмĕпе вăл хăйне валли обществăра кĕрĕшӳпе ĕç вырăнĕ шыраса тупса йышăннă. Госпитальрех вăл суккăрсен çырулăхне пысăк ăсталăхпа вĕреннĕ.

1945 çулта килне таврăнсан Акимов юлташ суккăрсене вĕрентес шухăш тытать. Вăл ялтан яла çӳрет. Суккăрсемпе паллашать, хăйĕн шухăшне каласа кăтартать. Вăл тăрăшнипе суккăрсен обществин районти организацине тунă, председатель пулма ăна хăйнех суйланă. Ырми-канми ĕçлекен председатель тăрăшнипе районта 27 суккăр çынна колхозсемпе промартельсенче хăйсене юрăхлă ĕçе вырнаçтарнă. Вĕсем хушшинче чăпта çапакансем, нăяв явакансем, сысна фермипче ĕçлекенсем те пур.

Акимов юлташăн пысăк ĕмĕт суралать. 1949 çулта вăл суккăрсем валли шкул уçнă. Пирвайхи çул ун патĕнче 12 çын, тепĕр çулне 8 çын вĕреннĕ. Кунсăр пуçне вăл 7 çынна заочно йĕркепе вĕренме пулăшать. Акимов юлташ талантлă учитель пулнине çак тĕслĕх те питĕ лайăх çирĕплетсе парать. Ун патĕнче икĕ çул вĕреннĕ çынсем И. В. Сталин юлташăн кĕске биографине суккăрсен çырулăхĕпе пичетленĕ кĕнекене хăйсем тĕллĕнех вулаççĕ. Шкул валли журналсем тата тĕрлĕрен кĕнекесем илсе тăраççĕ, вĕсем пурте алăран алла çӳреççĕ.

Каламалла, çак хĕрӳ чĕреллĕ çынпа районта пурте пулăшмалла пек. Анчах, ытла та тĕлĕнмелле; Акимов юлташăн пархатарлă ĕçне куç кĕретĕнех пӳлсе тăраççĕ. Тăвата уйăх иртсе те Акимов юлташ кăçал хăйĕн шкулне уçаймарĕ.

Камсем чăрмантараççĕ? Чунсăр çынсем, темелле, урăхла калама çук.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕ П. Сапожникова, ачаранах суккăр ӳснĕскер, шкула темĕн пекех каясшăн. Вĕреннĕ чухне тăранса пурăнма вăл колхозри пулăшу кассинчен уйăхне мĕн пурĕ те пĕр пăт çăнăх çеç ыйтать. Пулăшу касси фондĕнче хальхи вăхăтра 600 пăт ытла тырă шутланать. Анчах касса правленийĕн председателĕ С. Васильев тата колхоз председателĕ С. Тамуков вĕренме тăрăшакан инвалидшăн 7—8 пăт тырă хĕрхенсе тăраççĕ.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри пулăшу касси—районта чи вăйлисенчен пĕри. Анчах суккăрсен шкулне каясшăн çунакан икĕ колхозника пулăшма пĕр пăт çăнăх тупайман. Пулăшу касси правленийĕн председателĕ Т. Макаров юлташ—колхозри партбюро секретарĕ, колхоз председателĕн заместителĕ. Вăл инвалидсен ырă ĕмĕтне татнипе пушшех те тĕлĕнтерет.

Çавăн пекех Маленков ячĕпе тăракан, «Красный флот» колхозсенчи руководительсем суккăрсен шкулне кайма хатĕрленнĕ çынсене пĕр пуслăх пулăшу паман.

Çакăн çинчен районти организацисем, чи малтан райисполком пĕлеççĕ-ши? Лайăх пĕлеççĕ. Акимов юлташ райисполкомра кун сиктерсе пекех пулать. Пĕрре хăйне райисполком председателĕ И. Чудаков юлташ ял Совет председателĕсем патне ятарласа хут çырнă та, çав хутпа ялсене... Акимов юлташа хăйне кăларса янă. Социальнăй обеспечени пайĕнчи работниксем те волокитăран ытла иртеймен, колхозсене отношени яраççĕ те, ун çинчен тепĕр кунех манса каяççĕ.

Акимов юлташ çанталăка пăхмасăр ялтан яла çӳрет, ял Совечĕсемпе колхоз правленийĕсене çитет, вĕренме тăрăшакансене часрах шкула ăсатса яма тата пулăшма ыйтать. Бюрократла кăмăллă çынсем ăна кашни хутĕнчех сăмах параççĕ те тепĕр кунех манса каяççĕ.

Юлашки хут Акимов юлташа каллех социальнăй обеспечени пайĕнче куртăмăр.

— Сире, Петр Акимович, вăхăтлăх пулăшу кирлĕ мар-и?—ыйтрĕç унтан.—Кирлĕ пулсан, калăр, пирĕн министр заместителĕ хăй те пама хушрĕ.

— Эпĕ хам валли пĕр пус та ыйтмастăп. Спасибо, государство мана ахаль те пысăк пулăшу парать,—майĕпен тагса ответлерĕ Акимов юлташ.—Мана ӗçир хамăрăн шкула часрах уçма çеç пулăшăр, вара эпĕ сиртен урăх нимĕн те ыйтмастăп. Вăйăм-халăм пур чухне ĕçлесчĕ, хам пек çынсене пурнăçпа тан пыма пулăшасчĕ.

Çапла шутлать Тăван çĕршывшăн çапăçса икĕ куçне сухатнă хастарлă чунлă совет çынни. Эпир Первомайски райисполкомĕ Акимов юлташăн ырă ĕçне чăрмантарма пăхакансене чарма, ăна ĕçлеме условисем туса хурассине шанатпăр.

Н. ВОЛКОВ.

Чăвашторг уйрăмĕнчи „коммерсантсем“

Çак кунсенче Куславкка поселокне Чăвашторгăн Куславккари уйрăмĕ хĕвелçаврăнăш çăвĕ кӳрсе килчĕ. Пичкере кӳрсе килнĕ çăва эрех тытнă çĕмрĕк кĕленчесене тултарса сутма тытăнчĕç. Çу илме хăйсен кĕленчисемпе е ытти савăт-сапасемпе пынисем те пулчĕç. Анчах вĕсене те, çĕмрĕк кĕленчесене 2-шер тенке сутса, çу тултарса пама тытăнчĕç.

Мĕншĕн çăва эрех кĕленчи пулнă таса мар кĕленчесене тултарса пани çинчен ыйтсан, апат-çимĕç магазинĕнче ĕçлекен Калашникова продавщица Чăвашторг уйрăмĕн директорĕ Чамайкина çавăн пек суту-илӳ тума хушнă, тет.

Эпир совет суту-илĕвĕн йĕркине пăсакансем тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнасса кĕтетпĕр.

К. КУДРЯШОВ,
Çуртсем тăвакан заводри профсоюз комитечĕн председателĕ,
И. АГНИАШВИЛИ,
завком членĕ, инженер-конструктор,
М. АЛЕКСАНДРОВ,
заводри нумай тиражлă хаçат редакторĕ.

Стахановла цехра

1951 çулхи апрель уйăхĕнче заводра нумай тиражпа тухакан «Сталинец» хаçат стахановла ĕçлекен предприяти ятне илме тивĕçлĕ пулмалли положенипе условисене пичетлесе кăларчĕ. Инструментсем тăвакан цех коллективĕ çав документа пысăк активлăхпа сӳтсе яврĕ, хăй умне стахановла цех ятне илес тĕллев лартрĕ.

Цехри парторганизаци партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-массăллă ĕçе коллективăн творчествăллă активлăхне вăйлатас, усă курман резервсене палăртас, малта пыракан опытпа меслете анлă сарас, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатас задачăсемпе çыхăнтарса туса пырать. Положенипе условисем тăрăх, стахановла ĕçлекен цех ятне пур заданисене те вăхăтра, пысăк пахалăхпа пурнăçлакан, график тăрăх ĕçлекен цеха çеç параççĕ. Çавна асра тытса, цехри партбюро ларăвĕнче график тăрăх ĕçлесси çинчен сӳтсе яврăмăр. Партбюро цех мĕншĕн пĕр тикĕс ĕçлеменнине тĕпчесе тухрĕ, производствăри çитменлĕхсене пĕтерме, рабочисен, инженерсемпе техниксен пуçарулăхĕпе пултарулăхне татах вăйлатма пулăшакан решени йышăнчĕ. Çав лару хыççăн чылай организациллĕ-техникăллă мерăсем туса пурнăçа кĕртрĕмĕр, кашни участока, бригадăна график, задани çирĕплетсе патăмăр, мастерсемпе бригадирсен ответлăхне ӳстертĕмĕр.

Цехра 225 рабочи ĕçлет. Вĕсенчен çĕр çынна яхăн икĕ çул ытларах, 71 çынпĕр çултан та каярах ĕçлеççĕ. Урăхла каласан, çамрăк, производствăна лайăх хăнăхса çитмен рабочисем чылай. Çавăнпа рабочисене большевикла воспитани парасси, вĕсен ăсталăхне тăтăш ӳстересси пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк. Партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсем, инженерсемпе техниксем тата мастерсем рабочисене пур енчен те пулăшма, тухăçлă ĕçлеме лайăх майсем туса пама, стахановецсен опычĕпе паллаштарма тăрăшаççĕ. Çамрăк рабочие юлташла кĕтсе илесси, ăна оборудованипе, производствăпа, техникăпа хăвăртрах паллаштарма юлташла пулăшасси коллектив йăлине кĕрсе çитнĕ.

Иртнĕ çулсенче уйрăм рабочисем ĕç нормине тултарманни пире, цех руководителĕсене, хытах хумхантарман. 1951 çулăн малтанхи уйăхĕсенче те коллективра юлса пыракан рабочисем пурччĕ.

Пĕр рабочи ĕç нормине тултармасан та стахановла цех ятне памаççĕ. Çавăнпа пирĕн юлса пыракан рабочисене воспитани парас тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕ ĕçлемелле пулчĕ. Партбюро хăйĕн ларăвĕсенче коммунист-руководительсен отчечĕсене тăтăш итлеме тытăнчĕ. Пĕр ларура аслă мастер Плисов юлташ докладне сӳтсе яврăмăр. Вăл ертсе пыракан участокра темиçе рабочи ĕç нормине тултармасчĕ. Партбюро Плисов юлташ ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртрĕ, ăна паха сĕнӳсем пачĕ. Лару хыççăн эпир юлса пыракан рабочисене опытлă рабочисем çумне çирĕплетме йышăнтăмăр. Ку сĕнĕве коллектив ырларĕ. Стахановецсем çамрăксене хăйсен опычĕпе паллаштарма тытăнчĕç. Çавăнпа пĕрлех техникăна вĕрентес ĕçе вăйлатрăмăр, мастерсем çамрăксене лайăхрах инструментсем уйăрса пама, ĕçре ытларах пулăшма тытăнчĕç. Цехри профсоюз тата комсомол организацийĕсем, агитаторсем çамрăксене социализмлă ăмăртăва активлă хутшăнма пулăшрĕç. Рабочисен пĕрлехи пухăвĕсенче, производствăллă канашлусенче çамрăксене вĕрентесси мĕнле пыни çинчен часчасах сӳтсе явни, цехри партипе совет общественноçĕ çак ыйтупа тимлĕ интересленни пире хамăр лартнă тĕллеве кĕске вăхăтра пурнăçлама май пачĕ. Чылайранпа ĕнтĕ пирĕн цехра ĕç нормине тултарман рабочи çук.

Çамрăксене вĕрентес, вĕсене хăйсен опычĕпе паллаштарас тĕлĕшпе уйрăмах Мищенко юлташпа цехри партбюро секретарĕ Королев юлташ паха тĕслĕхсем кăтартнине палăртас пулать. Пĕлтĕр Мищенко юлташ виçĕ çамрăка—Зверев, Бурков, Пирожков юлташсене станокпа ĕçлеме вĕрентрĕ, хăйĕн опычĕпе паллаштарчĕ. Халĕ асăннă çамрăксем кăткăс инструментсем туса хатĕрлеççĕ, ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ. Королев юлташ вĕрентнĕ Красновпа Зимин юлташсем 1951 çулхи ĕç нормине 3 хут ытларах ирттерсе тултарчĕç.

Пĕтĕм коллектив ăмăртса ĕçлет. Уйрăмах пысăк пахалăхлă продукци туса кăларакан бригада ятне илессишĕн социализмлă ăмăрту анлă сарăлнине палăртас пулать. Ку ăмăртура Мищенко юлташ ертсе пыракан слесарьсен бригади тăтăш паха тĕслĕх кăтартать. СССР Электропромышленность министерстви ку бригадăна икĕ хут пысăк пахалăхлă продукци туса кăларакан бригада ятне пачĕ. Мильманпа Литвинский юлташсем ертсе пыракан бригадăсем пĕрмай паха продукци туса кăлараççĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен бригадисенчен Морозов юлташ ертсе пыракан бригада пысăк ӳсĕмсем тунине палăртас пулать.

Ăмăртура кам мĕнле çĕнтерӳсем тунине, кам мĕнле вырăн йышăннине коллектив куллен пĕлсе тăрать. Коллективра наглядлăй агитаци лайăх йĕркеленĕ. Сменăсем, бригадăсем тата рабочисем графика мĕнле пурнăçланине куллен кăтарту хăми çине çыраççĕ. Кашни рабочи коллективăн тата хăйĕн ĕç результачĕсене тăтăш курса тăрать. Кашни рабочин уйрăм лицевой счет пур. Çав счет çине рабочи иртнĕ уйăхра ĕç нормине мĕн чухлĕ тултарнине, мĕн чухлĕ ĕçлесе илнине çыраççĕ. Лицевой счетсем курăнмалли вырăнта çакăнса тăраççĕ.

Коллектива хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене мобилизацилес тĕлĕшпе стена хаçачĕ пысăк вырăн йышăнать. Стена хаçачĕ социализмлă ăмăрту мĕнле пынине, кам мĕнле тĕслĕхсем кăтартнине тăтăш çутатать, ĕçри çитменлĕхсене, кам мĕнле вырăнта ĕçленине пăхмасăр, хытă критикăлать, паха сĕнӳсем парать. Витĕмлĕ каррикатурăсемпе фельетонсем юлса пыракансене, ĕç çине çиелтен пăхакансене тата брак тăвакансене питлеççĕ.

Пĕр вăхăтра транспорт япăх ĕçлетчĕ. Стена хаçачĕ çавăншăн цех начальникне хытă критикăларĕ. Ку çитменлĕхе пĕтерме çийĕнчех тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла пулчĕ. Кладовщик станоксене шăлса тасатмалли материала перекетлеменнипе, кам та пулин ĕçсĕр тăнипе е дисциплинăна пăснине—çаксене пурне те хаçат асăнмасăр хăвармасть.

— Уйăхра 150 штампран кая мар туса кăларар! Хурçă татăкĕсене пурне те пухар! Производство культурине пĕрмай ӳстерер!—тесе чĕнекен тата ытти лозунгсемпе плакатсем рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене хăйсем йышăннă социализмлă обязательствăсене часлă пурнăçлама мобилизацилеççĕ. Çиçĕм хаçатсем хăш задание хăвăртрах пурнăçламаллине астутараççĕ е коллективра пысăк событи пулса иртнине пĕлтереççĕ. Илемлĕ диаграммăсем цех плана мĕнле тултарса пынине кăтартаççĕ. Наглядлăй агитаци коллектива куллен пĕр шухăш-ĕмĕтпе пурăнса ĕçлеме, юлташлăха, пуçарулăха ӳстерме пулăшать.

Производствăллă канашлусем, рабочисемпе служащисен пĕрлехи пухăвĕсене ирттерни, панă сăмаха мĕнле пурнăçланине тăтăш тĕрĕслени, социализмлă обязательствăсене çĕнетсе пыни, критикăпа самокритикăна анлă сарни коллективăн творчествăллă активлăхне ӳстерет, ĕçре тĕл пулакан çитменлĕхсемпе чăрмавсене большевикла хăюлăхпа пĕтерсе пыма пулăшать.

Станочниксем оборудование лайăх пăхса усрама тата тухăçлă ĕçлеттерме социализмлă обязательство илчĕç. Нумаях пулмасть ĕç вырăнне мĕнле йĕркеленине тĕрĕслеме обществăллă смотр ирттертĕмĕр. Ку смотра коллектив активлă хутшăнчĕ. Çавăн хыççăн производство культурине лайăхлатмалли, продукци пахалăхне ӳстермелли 61 мероприяти палăртрăмăр. Çав мероприятисенчен виççĕмĕш пайне пурнăçа кĕртнĕ.

Чылай рабочисем рационализаторла сĕнӳсем параççĕ, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатма пулăшаççĕ. Цех начальникĕн заместителĕ Рогачев юлташпа стахановец Мильман юлташ пĕр детале çĕнĕ меслетпе туса кăлармалли сĕнӳ пачĕç. Вăл сĕнĕве пурнăçа кĕртни ĕçе хăвăртлатма, хаклă материал—йăс 50 процент таран перекетлеме май парать. Стахановец-новаторсем Королев, Романов, Щепелев, Краснов, Дешевов юлташсем металла хăвăртрах касмалли майсем тупас тĕлĕшпе тимлĕ ĕçлеççĕ. Королев юлташ хурçă касмалли çĕнĕ йышши фрезăпа ĕçлет. Çав фрезăна унăн сĕнĕвĕ тăрăх туса хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне вăл тата ытти ĕç хатĕрĕсем тăвать. Королев юлташран пример илсе, Романовпа Щепелев токарьсем инструментсене çĕнĕлле хăйрама, станоксене тухăçлăрах ĕçлеттерме вĕренсе çитрĕç. Вĕсем станоксене минутра 600 метр тăршшĕ ытла металл касмалла тунă.

Парторганизаци коммунистсене чи ответлă та йывăр участоксене вырнаçтарнă. Партбюро куллен коммунистсен производствăри авангардлă рольне ӳстерессишĕн, коллектив активлăхне вăйлатассишĕн кĕрешет. Коммунистсен пĕрлехи пухăвĕсенче хамăр йышăннă социализмлă обязательствăсене мĕнле пурнăçлани, агитациллĕ-массăллă ĕçе мĕнле йĕркелени, производство культурине хăпартасси çинчен тăтăш сӳтсе яватпăр.

Коллектив хастарлăхĕ ӳссе пынине кăтартакан тĕслĕхсем нумай. Цехри рабочисенчен 80 процентĕ стахановец, ыттисем—ударник. 1951 çулта 19 рабочи икĕ çулталăкри ĕç нормине тултарчĕ. Петров, Литвинский, Зимин, Кириллов, Саваровский юлташсем виçĕ çулталăкри, Королев, Мищенко, Мильман юлташсем—тăватă çулталăкри ĕç нормине тултарчĕç.

1951 çулхи ноябрь уйăхĕнче заводри партком, завком тата дирекци пирĕн цеха, ытти цехсенчен пуринчен малтан, чыслă ят—стахановла ĕçлекен коллектив ятне пама йышăнчĕç. Çакă цехри рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене хытă хаваслантарчĕ, вĕсем малашне тата тухăçлăрах ĕçлеме сăмах пачĕç.

1952 çулта завода пĕлтĕрхинчен пысăкрах задани панă. Çавна май цех умĕнче ответлă задачăсем тăраççĕ: штамписемпе пресформăсем, резецсем ытларах туса хатĕрлемелле, вĕсен пахалăхне лайăхлатмалла, материалпа электроэнерги ытларах перекетлемелле. Ĕç тухăçлăхне тата ӳстерес тесе кивелнĕ нормăсене пăхса тухса çĕнĕ, стахановла нормăсем çирĕплетрĕмĕр. Уйрăм участоксенчи рабочисем çĕнĕ нормăсем тăрăх ĕçлеççĕ. Технологи процесне çĕнетсе лайăхлатма пулăшакан организациллĕ-техникăллă ĕçсен планне туса хатĕрлерĕмĕр.

Бригадăсемпе сменăсем, рабочисем 1952 çулта çĕнĕ çĕнтерӳсем тума сăмах пачĕç. Цехра социализмлă ăмăрту çĕнĕ хăватпа вăйланса кайрĕ. Парторганизаци ертсе пынипе, цех коллективĕ хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене чыслă пурнăçлĕ, пĕтĕм завод коллективне стахановла ĕçлекен предприяти ятне илме тивĕçлĕ пулма пулăшĕ.

Е. ДМИТРИЕНКО,
Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри инструментсем тăвакан цех начальникĕ.

ООН Генеральнăй ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ыйтупа Политика комитечĕ Совет Союзĕ тăратнă резолюци проектне йышăннă

ПАРИЖ, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Политика комитечĕн январĕн 24-мĕшпе 25-мĕшĕнче пулнă ларăвĕсенче Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ыйтăва малалла сӳтсе явнă.

США делегацийĕ, ăна Перу делегачĕ пулăшнипе, Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе ООН Уставĕнче тунă условисемпе йĕркесенчен пăрăнса, халăх демократи çĕршывĕсене хисеплес мар, вĕсене нимĕн вырăнне те шутлас мар политикăна пурнăçлама хăтланни пĕтĕмпех путланса ларнă. Çакă чылай çĕршывсен делегацийĕсем тухса каланинчен паллăртнă.

Перу делегачĕ Белаунде хăйĕн проектне «мĕн тери ăслăн çырса» Политика комитетĕнче сӳтсе явма тăратнинчен нумай делегатсем хытă тăрăхласа мăшкăлланă. Вĕсем асăннă проектăн шухăшĕ, ăна практикăра пурнăçлас енĕпе илсен, ниме те тăманнине, асăннă проект çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе США юрăхсăр позици йышăннă пирки ку ĕçре пулса тăнă йывăрлăха пĕтерме нимĕн чухлĕ те пулăшманнине палăртнă. Вĕсем ку ĕçри йывăрлăха пĕтермелли пĕртен-пĕр тĕрĕс çул вăл ООН членне илме ыйтса государствăсем панă заявленисене пурне те çĕнĕрен пăхса тухассинче тата вĕсене пурне те пĕр харăс ООН членне илессинче пулать, тенĕ. Çапла вара, вĕсем ку ыйтăва Совет Союзĕ тăратнă резолюци проектĕнче каланă пек татса панипе кăна Пĕрлешнĕ Нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ĕçри йывăрлăха пĕтерме май килет, тесе шутланă.

Совет Союзĕн сĕнĕвĕнче ООН членне илме ыйтакан 14 государствăна Пĕрлешнĕ нацисен организацине пĕр харăс илмелле тесе каланă. Çавна хирĕç калаcа, США представителĕ Гросс ку сĕнӳ Устава хирĕç пырать, тенĕ. США представителĕ çавăн пек калани тĕрĕс мар пулнине чылай делегацисем палăртнă.

США делегацийĕпе пĕрле ĕçлекен делегатсем заявлени панă государствăсене пурне те пĕр вăхăтрах ООН членне илмелли принципа, совет делегацийĕн сĕнĕвĕнче çырса хунăскерне, ырланипе пĕрлех, резолюцире государствăсене асăнса тухма кирлĕ мар, тенĕ. Çапла каласа, вĕсем Хăрушсăрлăх Совечĕн тата тепĕр икĕ «пукане» правительство—Ли Сын Манăн пукане правительстви США «Корея республикин» правительстви текенскерĕ, тата Вьетнамăн Франци çарĕсем оккупациленĕ территорири Франци колонизаторĕсем уйăрса лартнă Бао-Дай правительстви ООН членне илме ыйтса панă заявленисене те пăхса тухмаллине асăра тытнă, ку заявленисене те Хăрушсăрлăх Советĕнче пăхса тухмалли çинчен каланă. Ку сĕнĕве вĕсем Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ыйтăва татса парассине чăрмантарас шутпа, ку ыйтăва пăхса тухас ĕçе çĕнĕрен йывăрлăха кĕртсе ӳкерес шутпа панă, çакна ăнланса илме çăмăл ĕнтĕ.

Перу делегачĕн сĕнĕвĕ, чăннипе илсен, путланса ларнă. Çавăн пирки США делегацийĕ хăйне итлекенсем урлă, çăмахран, Коста-Рика делегачĕ урлă çĕнĕ маневрсем тунипе хăйĕн ĕçне çăлса хăварма хăтланнă. Коста-Рика делегацийĕ, Вăтаçĕр Америкăри ытти тăватă çĕршыв представителĕсемпе пĕрле, лару пуçлансанах резолюцин çĕнĕ проектне тăратнă. Унта Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе рекомендаци йышăннă чухне Хăрушсăрлăх Советĕнчи пур ыйтусене те пĕр саслă пулса татса памалли принципа усă курас пирки Генеральнăй Ассамблейăн тепĕр хут Тĕнчери çĕршывсен судĕнчен канаш ыйтмалла, тесе çырнă.

Çак ĕç çине Комитетăн уйрăмах асăрхаса пăхмалли çинчен СССР делегацийĕн пуçлăхĕн заместителĕ Я. А. Малик каласа панă. Вăл çакна палăртнă: нумай çулсем хушши ĕнтĕ Хăрушсăрлăх Советĕнчи пур ыйтусене те пĕр саслă пулса решени йышăннипе татса памалли принципа пĕрмай ăнаççăр тапăнаççĕ, халĕ асăннă сĕнӳ авторĕсем те хăйсен проектне тăратса çав принцип çине тепĕр хут тапăнма хăтланаççĕ. Перу делегачĕ панă сĕнӳ—çĕнĕрен редакциленĕ, чылай улăштарса тӳрлетнĕ хыççăн та Устава тата Хăрушсăрлăх Совечĕ Генеральнăй Ассамблейăн ĕççене пăхса тухмалли йĕркисене хирĕç пыракан сĕнӳ путланса ларнă хыççăн Коста-Рикăпа ытти тăватă çĕршывăн делегачĕсем хăйсен резолюци проектне тăратрĕç.

Коста-Рикăпа ытти тăватă çĕршыв делегацийĕсем хăйсен резолюци проектне кая юлса, пĕтĕмĕшле дискусси вĕçленнĕ хыççăн малтан сĕннĕ резолюци проекчĕсене сӳтсе явас ĕç вĕçленсе пынă вăхăтра тăратнă. Çавăнпа та Ассамблея комитечĕсем мĕнле ĕçлемелли çинчен тунă тата пурте йышăннă йĕркесем тăрăх çĕнĕ проекта сӳтсе явмалла мар, ăна сасăлама тăратмалла мар, тенĕ Малик.

Лару председателĕ Комитет малтанах сĕннĕ резолюцисене сӳтсе явас ĕçе пĕтернĕ тата вĕсене йышăнас пирки сасăланă хыççăн çĕнĕ резолюци проектне сӳтсе явас тата сасăлас ыйтăва пăхса тухма пултарать, тенĕ.

Кун хыççăн Комитет маларах тăратнă резолюци проекчĕсене тата вĕсене кĕртме сĕннĕ тӳрлетӳсене малалла сӳтсе явнă.

Инди, Дани, Норвеги тата Египет делегачĕсем Совет Союзĕ сĕннĕ резолюци проекчĕшĕн сасăлама килĕшни çинчен, çав проектра Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ĕçри йывăрлăхран тухма май паракан пĕртен-пĕр çула палăртни çинчен каланă. Хăшпĕр делегацисем США представителĕ шухăшĕпе—совет делегацийĕн проектне сирсе ямалла тенипе килĕшменни çинчен, хăйсем нихăш майлă та сасăлама килĕшменни çинчен пĕлтернĕ.

Политика комитечĕн январĕн 24-мĕшĕнче кăнтăрла пулнă ларăвĕнче Я. А. Малик сăмах тухса каланă, халиччен тăратнă резолюци проекчĕсемпе тӳрлетӳсем пирки совет делегацийĕ мĕнле позици тытса пыни тата мĕншĕн çавăн пек позици тытса пыни çинчен ăнлантарса панă.

— Кунта май умăн тухса каланă ораторсенчен хăшпĕрисем,—тенĕ вăл,—Совет делегацийĕ мĕне асра тытса ООН членне илме ыйтакан государствăсен, Совет Союзĕ проектĕнче асăннă государствăсен заявленийĕсене Хăрушсăрлăх Советĕнче çĕнĕрен пăхса тухма сĕнет, тесе ыйтрĕç. Совет делегацийĕ ячĕпе эпĕ çапла ответ пама пултаратăп: Совет делегацийĕ хăйĕн проектне тăратса, çав заявленисене ячĕшĕн кăна мар çĕнĕрен пăхса тухмаллине асра тытнă. Вĕсене халиччен те питĕ нумай хутчен ячĕшĕн кăна «çĕнĕрен пăхса тухнă». Ку заявленисене çĕнĕрен пăхса тухнипе Хăрушсăрлăх Совечĕн асăннă государствăсене пурне те пĕр харăс ООН членне илме сĕнесси çинчен решени йышăнмалла. Хăрушсăрлăх Совечĕ СССР тăратнă резолюци проектĕнче асăннă 14 государствăран пурне те ООН членне илме сĕнме май тупассине совет делегацийĕ асра тытать.

Асăннă 14 государствăра, тулли мар сведенисем тăрăх, 112 миллион çын ытла пурăнать, тенĕ Я. А. Малик. Çак 14 государствăна ООН членне илнипе Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн членĕсен шучĕ 74 çитет, ООН пĕрлештерсе тăракан çĕршывсенчи халăхсен йышне 112 миллион çын ытла хутшăнать.

Америка лагерĕнчи çĕршывсен хăшпĕр делегацийĕсем ССР Союзне айăпласа, СССР хăйĕн резолюци проектĕнче Кăнтăр Корейăри пукане правительствăна асăнмасть, тенĕ пулсан, кун пирки Малик çапла каланă:

— Америка çар влаçĕсем туса хунă тата Америка штыкĕсем хӳтĕленипе тытăнса тăракан пукане правительство çине эпир мĕнле пăхнине пурте пĕлеççĕ. Анчах эпĕ ку ыйту пирки нимĕн те каласшăн мар, мĕншĕн тесен çак кунсенче çеç Политика комитечĕ халлĕхе Корея ыйтăвне сӳтсе явма тăхтаса тăрасси çинчен решени йышăнчĕ. Политика комитетĕнче ку решение йышăнас ĕçе США представителĕ пуçарчĕ, вăл çав решение йышăнтарасшăн пулса, ăна питĕ хытă хӳтĕлерĕ. Шăпах та вăл ĕнтĕ халлĕхе Корея ыйтăвне сӳтсе явас мар, ăна сӳтсе явни Корейăри вăрçа чарса лартма перемири тăвасси çинчен пыракан калаçусене чăрмантарма пултарать, терĕ.

Комитет халлĕхе ку ыйтăва пăхса тухма тăхтаса тăрасси çинчен решени йышăнчĕ. Ку решени тĕрĕс мар пулин те, комитет çакăн пек решени йышăнса хăварчĕ. Ун чухне США делегацийĕ Корея ыйтăвне сӳтсе явассинчен пăрăнчĕ, ăна пăхса тухас ĕçе чарса лартрĕ. Халĕ вара, Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илесси çинчен сӳтсе явнă чухне, США делегацийĕ Кăнтăр Корейăри пукане правительство çинчен сăмах хускатать. ССР Союзĕ 14 государствăна ООН членне илесси çинчен резолюци проекчĕ тăратнă хыççăн, ăна йышăнма чăрмантарас шутпа, çав ыйтăва хускатни уççăнах паллă. Çавăнпа та совет делегацийĕ ку ыйтăва—Кăнтăр Корейăри законсăр йĕркепе тунă пукане влаçа, Корея халăхĕн ирĕкне палăртса тăман скере, ООН членне илес ыйтăва пуçарассине хирĕç хытă тăрать. Ыйтăва çавăн пек лартнипе эпир килĕшме пултараймастпăр.

Перу делегачĕ тăратнă резолюци проекчĕн юлашки вариантне Малик пĕтĕмпех тишкĕрсе тухнă. Вăл проектăн пĕр пункчĕ хыççăн тепĕр пунктне тишкĕрчĕ, çав документ практикăллă ĕçсем енĕпе те, законлăх енĕпе те, политика енĕпе те ниме тăманнине, ăна йышăнни Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ыйтăва татса пама нимĕн чухлĕ те пулăшманнине, пачах урăхла пулассине, ăна йышăнни ку ыйтăва татса парас ĕçе чăрмантарнине кăтартса панă.

Польшăпа Чехословаки представителĕсем сăмах илсе, хăйсем СССР резолюци проектне пĕтĕмпех ырлани тата ăна йышăнасшăн пулни çинчен каланă. Вĕсем СССР резолюци проекчĕ Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ыйтупа тĕрĕс тата конкретлă решени, Уставра çырса хунă принципсемпе тата правилăсемпе килĕшӳллĕ решени йышăнмалли шанчăклă проект пулнине палăртнă.

США делегачĕ Гросс каллех Перу резолюци проектне ырланă. Вăл Совет Союзĕ 14 государствăна пĕр харăс ООН членне илме сĕннипе килĕшменни çинчен тепĕр хут каланă.

Январĕн 25-мĕшĕнчи ирхи ларура Политика комитетĕнче халиччен тăратнă тата сӳтсе явнă резолюци проекчĕсене йышăнас пирки сасăлас ĕç пуçланнă.

Чылай делегацисем çĕнĕ членсем илес ыйтупа тĕрĕс тата практикăра усăллă решени йышăнма тăрăшни Перу сĕнĕ резолюци çав ĕçе тума май паманнине ăнланса илни Совет Союзĕн резолюци проектне сасăланă чухне палăрнă. СССР резолюци проектĕнче: Хăрушсăрлăх Советне Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн членне илме ыйтса Албани, Монголи Халăх Республики, Болгари, Румыни, Венгри, Финлянди, Итали, Португали, Ирланди, Трансиордани, Австри, Цейлон тата Непал панă заявленисене тепĕр хут пăхса тухма, çавăн пекех Ливан панă заявление пăхса тухма сĕнет, тесе каланă.

Ку сĕнĕве тата СССР делегацийĕ хăйĕн проектне умсăмах вырăнне кĕртнĕ Аргентина тӳрлетĕвне Политика комитечĕ йышăннă. Умсăмахра: Генеральнăй Ассамблея «Пĕрлешнĕ нацисен организацине пур çĕршывсем те хутшăннă организаци тума пурте тăрăшнине, унта мире юратакан, Уставра çырса хунă обязательствăсене йышăнакан тата, организаци хак панă тăрăх, çав обязательствăсене пурнăçлама пултаракан, вĕсене пурнăçлама хатĕр пулнине кăтартакан пур государствăсем те членра тăма пултарассине асра тытса», тесе çырнă.

Совет Союзĕн çак сĕнĕвне хирĕç США делегацийĕ тата США-на ытла хытă пăхăнса тăракан çĕршывсен 11 делегацийĕ кăна сасăланă. Совет Союзĕн сĕнĕвне йышăнассишĕн 21 делегаци сасăланă (СССР, Украина ССР, Белорус ССР, Чехословаки, Польша, Йемен, Саудовски Аравви, Ирак, Иран, Египет, Ливан, Сири, Швеци, Дани, Норвеги, Афганистан, Инди, Индонези, Бирма, Аргентина, Югослави). 25 делегаци, çав шутра Англипе Франци делегацийĕсем, Совет Союзĕн сĕнĕвне хирĕç сасăлама хăяйман, вĕсем Пĕрлешнĕ нацисен организацине çĕнĕ членсем илес ыйтăва татса панă çĕрте тĕрĕс, Уставпа килĕшӳллĕ тата пур государствăсене те пĕр пек хисеплекен решени йышăнассине хирĕç пулнипе пĕтĕмпех намăса кĕрессинчен хăранă.

Лару хупăнас умĕн Коста-Рика делегацийĕпе Вăтаçĕр Америкăри тăватă çĕршыв делегацийĕсем кая юлса тăратнă сĕнĕве сӳтсе явассине сӳтсе явас марри çинчен решени йышăннă. Çав сĕнӳре вĕсем Хăрушсăрлăх Советĕнче пур ыйтусене те пĕр саслă пулса решени йышăннипе татса памалли принципа ООН членне илнĕ чухне усă курассипе усă курас марри çинчен Тĕнчери çĕршывсен судĕнчен канаш ыйтмалла, тенĕ. Кун пирки йышăннă решенире: Политика комитечĕ кун йĕркинчи тепĕр ыйтăва пăхса тухнă хыççăн асăннă сĕнĕве сӳтсе явассипе сӳтсе явас марри çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухать, тенĕ.

Председатель комитет тепĕр ларура кун йĕркинчи черетри ыйтăва—гоминдан элекне сӳтсе явма тытăнасси çинчен пĕлтернĕ.

Корейăри ĕççем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтернĕ.

Ĕнер хĕвелтухăçĕнчи фронтăн уйрăм участокĕсенче тăшман вăçшер хутчен тапăнса Халăх çарĕн позицийĕсем çинĕ атакăсем тума хăтланнă, анчах ăна каялла хăваласа янă, унăн çухатусем пысăк пулнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсен отрячĕсем паян тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ, çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, хĕвелтухăçĕнчи çыранри районсене, тата пуринчен ытларах, Вонсан районне тапăннă çĕре хутшăннă пулнă.

ПХЕНЬЯН, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтернĕ.

Ĕнер хĕвелтухăçĕнчи фронтăн уйрăм участокĕсенче тăшман Халăх çарĕн чаçĕсен оборонин малти пайĕ çине сывлăшран бомбăсем нумай пăрахнă тата тупăсемпе питĕ вăйлă пенĕ, атакăсем тума хăтланнă. Халăх çарĕн чаçĕсем тăшмана хăваласа янă, ăна сиен кӳнĕ.

Ĕнер Халăх çарĕн чаçĕсем хĕвеланăçĕнчи çыран çывăхĕнче, Декдо утравĕ патĕнче тăшманăн пĕр тральщикне шыва путарнă, унччен çав тральщик çыран тăрăхĕнчи халăх пурăнакан района тупăсемпе пеме хăтланнă пулнă.

Египетра вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хуни çинчен пĕлтернĕ

КАИР, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Аль-Мысри» тата «Аль-Ахрам» хаçатсем правительство çĕршывра вăрçă вăхăтĕнчи пек йĕрке туса хуни çинчен, Египет премьер-министрне Нахас-пашана Египетăн çар генерал-губернаторĕ пулма уйăрса лартни çинчен пĕлтернисене пысăк заголовоксемпе пичетленĕ.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Нахас-паша ĕнер каçхине правительствăн черетсĕр ларăвне пухнă. Лару виçĕ сехет хушши пынă. Правительство пĕтĕм çĕршывĕпех вăрçă вăхăтĕнчи пек йĕрке туса хунă, Египет çар генерал-губернаторĕ пулма Нахас-пашана уйăрса лартнă, пур университетсемпе шкулсенче те, паллă мар вăхăта, занятисем иртterме чарнă.

Министрсен совечĕн ларăвĕ пулнă хыççăнах çар генерал-губернаторĕ Нахас-паша социальнăй ĕçсен министрне Хасан-пашана генеральнăй цензор пулма уйăрса лартасси çинчен приказ кăларнă. Çавăн пекех вăл провинцисен губернаторĕсене çар губернаторĕсем пулма уйăрса лартни çинчен, январĕн 27-мĕшĕнчен Каирта тата ун çывăхĕнчи Газа поселокра комендант ирĕк памасăр каçхине 6 сехетрен пуçласа ирхи 10 сехетчен çӳреме чарни çинчен приказсем кăларнă.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Александрия губернаторĕ халĕ хăй çар губернаторĕ шутланнă май январĕн 26-мĕшĕнчен хулара чрезвычайнăй йĕрке туса хуни çинчен, демонстрацисемпе пухусем иртterме чарни çинчен приказ кăларнă.

Каирта тата Суэц каналĕ патĕнче ĕнер пулса иртнĕ ĕçсем çинчен паян тухнă хаçатсем нимĕн те пĕлтермеççĕ. Нумай хаçатсем паян тухман. Хулара пурте тарăхса пăлханма тытăнни сисĕнет.

Англи Египета хăратать

ЛОНДОН, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çакăн пек хыпар пĕлтерет: ĕнер Мальтăри портран «Глазго» крейсер Суэц каналĕ патне кайма тухнă. Суэц каналĕ патĕнче халĕ «Ливерпуль» крейсер пур, вăл Порт-Саидра тăрать.

«Клеопатра» крейсер та Суэц каналĕ патне кайма тухни çинчен пĕлтереççĕ.

Египетăн Вашингтонри посольствин заявленийĕ

ЛОНДОН, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Египетăн Вашингтонри посольстви ĕнер каçхине заявлени пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: Англин Исмаили хулине оккупацилесе тăракан çарĕсем «ку районта пурăнакан çынсене хăйсен килĕсенчен хăваласа кăларнă. Англи çарĕсем халăха калама çук хытă хĕсĕрленĕ. Вĕсем хĕрарăмсене урама хăваласа кăларнă, çуртсене çаратнă, çынсен пурлăхĕсене пĕтерсе тăкнă, хĕрарăмсемпе ачасене концентраци лагерĕсене илсе кайнă».

Тунисри ĕççем

ПАРИЖ, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем Тунисри лару-тăру çаплах йывăр пулни çинчен пĕлтереççĕ. Франци çарĕсем, полицийĕ тата жандармерийĕ Тунис патриочĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе вăйлатаççĕ.

«Юманите» хаçат Тунисран килекен хыпарсем кунтан-кун сахалланса пынине палăртать. Анчах хытă тĕрĕслекен цензура витĕр тухса килекен хăшпĕр хыпарсенчен унта халĕ те вăрçă чухнехи пек лару-тăру пулни çинчен пĕлме пулать. Фондук-Джелид хулинче (Тунис хулинчен 20 километр кăнтăр еннерехре) ĕнер халăхпа полици хушшинче тытăçусем пулнă. Халăхпа полици нумай хутчен тытăçса çапăçнă. Тебульба тата Сахела хулисенче те тытăçусем пулса иртнĕ, çав хуласенчи халăх демонстрацисем иртterнĕ.

ПАРИЖ, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите-диманш» хаçат çакăн çинчен пĕлтерет: Франци министрĕсен совечĕ январĕн 25-мĕшĕнче çĕрле пулнă ларура Тунисра çар епĕпе çĕнĕ ĕçсем тума решени йышăннă. Тунисра лару-тăру çивĕчленсе пырать. Франци правительстви Туниса çĕнĕ çар чаçĕсем ярать.

Ĕнер Францин Тунисри генеральнăй резиденчĕ де Отклок Тунис бейне нота панă. Унта Франци правительстви Тунис правительствине хăйĕн жалобине ООН-ран каялла илме хушать.

«Юманите диманш» хаçат полици Тунисра миçе çынна вĕлерни çинчен официальнăй сведенисем пĕлтерет. Çав сведенисем тăрăх, январĕн 18-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче Тунис патриочĕсене 68 çынна вĕлернĕ, темиçе çĕр çынна амантнă.

«Журналь-дю-диманш» хаçат çакăн çинчен пĕлтерет: ĕнер Туниса Франци министрĕсен совечĕн представителĕ тата ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин ответлă чиновникĕ пынă. Вĕсем де Отклока Ориольпе Фор çырăвĕсене панă, çав çырусене Тунис бейне пама хушнă. Хăшпĕрисем каланă тăрăх, ку çырусенче çĕршывра лăпкăлăх тусан, Тунисăн икĕ министрне Парижран каялла чĕнсе илсен, Пĕрлешнĕ нацисен организацине панă жалобăна каялла илсен кăна Тунис правительствипе Франци правительстви хушшинчи калаçусене çĕнĕрен пуçлама пулать тесе пĕлтернĕ.

Францин реактивлă «Вампир» текен самолечĕсем Келибиа ялĕ çине тапăнма çаплах пăрахман.

Ливан хаçачĕ империалистсен Ливанри тата Сирири планĕсене тăрă шыв çине кăларать

БЕЙРУТ, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Аль-Байрак» хаçат, Ливанри «Аш-Шааб» хаçатăн Парижри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, çакăн пек хыпар пичетленĕ:

«Аш-Шааб» хаçат корреспонденчĕ Франци ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче ĕçлекенсенчен пĕлнĕ тăрăх, Францири тивĕçлĕ органсенче Ливанпа Сири территорийĕсене çарсем антарас ĕçе тĕпчесе вĕренме тытăннă. Çав ĕçе Трумэнпа Черчилль канашланă хыççăн пуçарнă. Ăна «пĕрлехи оборона» планĕ текенскерне пурнăçлама хатĕрленес шутпа тăваççĕ.

«Франци ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинчи пĕр служащи мана Ливанпа Сири территорине антармалли çарта Францине Америка çар чаçĕсем пуласси, вĕсене Франци командованийĕ ертсе пырасси çинчен пĕлтерчĕ, çав çарсене кăçалхи апрель уйăхĕнче антарма, ку ĕçе хăвăрт тума палăртнă тесе калаççĕ,—тесе çырать «Аш-Шааб» хаçат корреспонденчĕ.

Студент-физкультурниксен ăмăртăвĕ

Январĕн 26—27-мĕшĕсенче институтсенчи тата техникумсемпе училищĕсенчи физкультурниксемпе физкультурницăсен республикăри ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Ăмăртăва пурĕ 350 çын хутшăнчĕ. Студентсем йĕлтĕрпе, конькипе ярăнас тата гимнастика тăвас енĕпе ăмăртрĕç.

Ăмăртăва пĕррĕмĕш ушкăн енĕпе Чăвашсен педагогика институчĕпе ялхуçалăх институчĕн, Канашри учительсен институчĕн тата Етĕрнери педагогика училищинчи физкультура уйрăмĕн командисем, иккĕмĕш ушкăн енĕпе—16 техникумпа училище командисем хутшăнчĕç.

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕнче Шупашкарти художество училищи студенчĕ Мартынов юлташ уйрăмах паха тĕслĕх кăтартрĕ. Вăл 10 километра 44 минут та 36 секундра тата 18 километра 1 сехет те 17 минут та 15 секундра ярăнса тухса, пĕррĕмĕш вырăнсене йышăнчĕ, иккĕмĕш разряд нормисене тултарчĕ. Чăваш пединститут студентки Мясникова юлташ 5 километра 25 минут та 10 секундра, кооператси техникумĕн студентки Емельянова юлташ—8 километра 40 минут та 13 секундра ярăнса тухрĕç. Вĕсем иккĕшĕ те пĕррĕмĕш разряд нормине тултарчĕç.

Слалом меслечĕпе ярăнассипе кооперации техникумĕн студенчĕ Иванов, трамплин çинчен сикессипе—Чăваш пединститут студенчĕ Романов пĕррĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç.

Пĕррĕмĕш ушкăнти командăсем енĕпе илсен Чăваш пединститут команди, иккĕмĕш ушкăнти командăсем енĕпе пир-авăр техникумĕн команди мала тухнă. Мала тухнă командăсене тата уйрăм физкультурниксемпе физкультурницăсене дипломсемпе хаклă парнесем панă.

Колхозниксен республикăри 4-мĕш шахмат чемпионачĕ вĕçленчĕ

Колхозниксен республикăри 4-мĕш шахмат чемпионачĕ вĕçленчĕ.

7—11-мĕш вăйăсенче Г. Дерягин, В. Романов, С. Васильев, П. Иванов уйрăмах лайăх вылярĕç.

Кĕрешӳ юлашки вăйă умĕн вăйлă пулчĕ. Романовпа Дерягин иккĕшĕ те 10-шар очко пухнă. 11-мĕш вăйă колхозниксем хушшинче республика чемпионĕ кам пулассине татса памалла пулнă. Чылай вăхăт хушши пынă кĕрешӳ Романов çĕнтернипе вĕçленчĕ. Вăл 11 очко пухса республика чемпионĕн хисеплĕ ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ. В. Романов—Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» ялхуçалăх артелĕнчи колхозник. Ăна пĕррĕмĕш степеньлĕ диплом панă.

Иккĕмĕш вырăна (10 очко илсе) Канаш районĕнчи участокри агроном Г. Дерягин юлташ тухрĕ.

Виççĕмĕшпе тăваттăмĕш вырăнсене (8,5-шер очко пухса) Шупашкар районĕнчи С. Васильев учитель, Муркаш районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхозри П. Иванов колхозник пайларĕç.

Çĕрпӳре

Вунă кунта—уйăхри плана. «Перламутр» промартель коллективĕ иртнĕ çулта планран иртterсе 283.800 тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ. Чĕртаварпа материал чылай перекетленĕ. Çулталăк хушшинче перекетленĕ чĕртавартан 24 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Продукцин хăйне ларакан хакне 13 процент чакарнă.

Рабочисемпе работницăсем тата служащисем çĕнĕ çулта производство планне иртterсе тултарассишĕн социализмлă ăмăртса ĕçлеме пуçларĕç. Тӳме фабрикинче ĕçлекен стахановкăсем К. Тарасова, А. Петрова, З. Степанова, К. Дмитриева тата Н. Чернова юлташсем кулленхи нормăна 140—145 процент тултарса пыраççĕ. Артельти паллă стахановка К. Осипова сменăри задание 160 процент таран тултарать.

Промартель çĕнĕ çулта кашни кун планран иртterсе продукци чылай туса кăларать. Социализмлă ăмăртура çĕвĕ çĕлекен цех малта пырать. Цех коллективĕ январĕн малтанхи вунăкунлăхĕнче пĕр уйăхри плана тултарнă.

Пĕлтерни

Январĕн 29-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче пропагандистсен семинарĕсем пулаççĕ:

1. Политшкул руководителĕсем валли (пĕррĕмĕш çул) «Совет Союзĕн Аслă Отечественнăй вăрçи» темăпа заняти мĕнле иртterесси çинчен». Руководитель П. Г. Григорьев юлташ.

2. ВКП(б) историйĕн кĕске курсне пĕррĕмĕш çул вĕренекенсен кружокĕсен руководителĕсем валли: «Большевиксен партийĕ Совет Союзĕн Аслă Отечественнăй вăрçи тапхăрĕнче». Руководитель Н. А. Смирнова.

3. Вăтам шкулсемпе техникумсенче историе вĕрентекен преподавательсем валли: «Марксистла-ленинла теори национальнăй-колониллĕ ыйту çинчен» темăпа лекци пулать. Лектор Е. Е. Варламов юлташ.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Англипе Совет Союзĕнчи халăхсен туслăх обществин заявленийĕ

ЛОНДОН, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Англипе Совет Союзĕнчи халăхсен туслăх обществи çакăн пек заявлени пичетлесе кăларнă:

«Январĕн 21-мĕшĕнче Рангун хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Чан Кай-ши çарĕсене Формоза (Тайвань) утравĕ çинчен Бирмăн сурçĕр пайне илсе пыма тытăннă. Çав çарсемпе Бирмăн çурçĕрти пайĕнчен Кăнтăр Китай çине наступлени пуçарма хатĕрленни çинчен пĕлтереççĕ. Çак факт ССР Союзĕн ООН Генеральнăй Ассамблейинчи делегаци руководителĕ Вышинский январĕн 3-мĕшĕнче ĕненмелле асăрхаттарса каланине çирĕплетет. Вышинский сессире тухса каланă чухне Америка карапĕсемпе Чан Кай-ши çарĕсене Формоза утравĕ çинчен Таиланда тата Бирмăн çурçĕрти пайне куçарас, Китая хирĕç вăрçма илсе каяс ĕçре усă кураççĕ, теннĕччĕ.

Çавăн пек асăрхаттарса каланине Англире шута илмерĕç. Англи халăхĕн Генеральнăй Ассамблея сессийĕнче Вышинский асăрхаттарса каланине шута илес пулать. Вăл каланине халĕ Бирмăран илнĕ хыпарсем, хĕвеланăçĕнчи çĕршывсене Китая хирĕç пуçаракан пысăк вăрçа хутшăнтарма кавар тума хатĕрленни çинчен пĕлтернĕ хыпарсем çирĕплетеççĕ. Англи халăхĕшĕн Китая хирĕç вăрçни вăл çĕнĕ çухатусемпе инкексем тӳсмеллине çеç пĕлтерет».

Бразили влаçĕсем миршĕн тăракансен Америка континентĕнчи конгресне Рио-де-Жанейро хулинче пухма чарнă

МОНТЕВИДЕО, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Уругвайри «Эль Паис» тата «Эль Диа» хаçатсем, Ассошиэйтед пресс, Интернейшнл ньюс Сервис тата Франс пресс агентствисем пĕлтернĕ тесе, çакăн пек хыпар пичетленĕ: Бразилин федеральнăй округĕн полици начальникĕ миршĕн тăракансен Америка континентĕнчи конгресне Рио-де-Жанейро хулинче иртterме чарнă.

Ответлă редактор М. К. КОСТИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00320 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.